# Сувар

Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ

*Н.В.Никольский ячĕллĕ премi лауреачĕ (2008), хаçата Чăваш халăх ăсхакăлпа ӳнер академийĕн Н.В.Никольский ячĕллĕ орденĕпе наградăланă (2013)*

2№ (1451), эрнекун, январь (кăрлач) уйăхĕн 21-мĕшĕ, 2022 çул






*К.Кошелева ӳкерчĕкĕ.*

# ХУСАНКАЙ ЦИФРА ĔМĔРĔНЧЕ ТЕ ПАЯНХИЛЛЕ

Тутарстанра 2022 çул  Цифровизаци çулталăкĕ пек иртет. Çавна май, республикăра пурăнакансене нумай çĕнĕлĕх кĕтет. Паянхи саманари улшăнусем çине тĕрлĕрен пăхма пулать, вăл харпăр тавракурăмран, пĕлӳ, тĕнчекурăм, ăс-тăн шайĕнчен килет. Анчах пĕри иккĕленӳсĕр – цифра этемлĕх пурнăçне самай çăмăллатать, ĕç йĕркине хăвăртлатать, халиччен май пулманнине пуриншĕн те  усă тăвать.

Чăваш халăхĕшĕн 2022 çул тепĕр пулăмпа та пĕлтерĕшлĕ: кăçал  эпир Чăваш халăх поэчĕн, пирĕн ентешĕмĕрĕн Петĕр Хусанкайăн 115 çуллăхне палăртатпăр. Хамăршăн ку çулталăкри ĕçе ун ячĕпе те çыхăнтарма йышăнтăмăр.

Хаклă вулакансем, эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, кашни çул пĕрремĕш номерпе пĕрле сирĕн пата «Сувар» календарĕ çитетчĕ. Кăçал та вăл çитĕ, анчах кăшт каярах. Календаре мĕне халалласси пирки нумай пуç ватрăмăр. Юлашкинчен Цифровизаципе Петĕр Хусанкайăн сăнарне пĕрлештерме шутларăмăр. Мĕншĕн тесен аслă поэтăмăрăн творчестви вилĕмсĕр, яланах актуаллă, хальхилле. Петĕр Хусанкай пурăннă пулсан цифровизаци паракан майсемпе еплерех усă курнă пулĕччĕ-ши? Ăслă çын пулнă май, чи лайăххине ĕçе илетчех пулĕ. Апла мĕнлерех тумалла-ха календаре? Ку идейăна пурнăçа кĕртме Чăваш Енри Елчĕк районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Мускавра пурăнакан çамрăк иллюстратор Ксения Кошелева пулăшрĕ. Инстаграмра ăна @chuvishen.kka ятпа тупма пулать.  Пысăк тав ăна.

Хаклă вулаканăмăрсем, пирĕн календарь сире те килĕшессе шанатпăр.

Ирина ТРИФОНОВА,
тĕп редактор.

*Ырă бабай: Тутарстанăн пĕрремĕш Президенчĕ Минтимер Шаймиев 85 çулта.*



*3 стр.*

*Хусанкай пултарулăхĕ вăл – чăн космос, нимĕнпе танлашми тĕлĕнмелле пуянлăх.*



*8 стр.*

*Дакар – 2022: пирĕн спортсменсемпе машинăсене çитекенни хальлĕхе çук!*



*4 стр.*

*Володар Тимофеев ертсе пынипе Теччĕ чăвашĕсем нумай ĕç тăваççĕ.*



*5 стр.*

Ытти хыпарсемпе хаçатăн  suvargazeta.ru  сайтĕнче паллашма пулать

## КĔСКЕН

**Омикрон.** Çĕнĕ çула кĕнĕренпе Раççейре коронавируспа чирлекенсен шучĕ каллех хăвăрт ÿссе кайрĕ. Халĕ омикрон текен çĕнĕ штамм пысăк хăвăртлăхпа сарăлать. Роспотребнадзорăн Эпидемиологин тĕп наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕн çумĕ А.Горелов ТАСС информаци агентствине пĕлтернĕ тăрăх, асăннă штамм уйрăмах 2-5 çулти ачасемшĕн хăрушă. Омикрон ернĕ ачасен пыр ыратать, кашни виççĕмĕшĕн вар-хырăм ĕçĕ пăсăлать. Нумайăшĕн бронхиолит пулса каять, кун пек чухне чирлĕ ачана госпитализаци кирлĕ. Çавăн пекех омикронран 65 çултан аслăрах çынсен те сыхланмалла.

Сăмах май, январĕн 18-мĕшĕ тĕлне Раççейре омикронпа 1682 çын чирленĕ. Тутарстанра та ку эрнере 11 ăнсăрта тупса палăртнине пĕлтерчĕç.

**Кĕрешме хатĕр.** Республикăри сывлăх сыхлав системи коронавирусăн çĕнĕ омикрон штамĕпе кĕрешме хатĕр. Регионта кирлĕ чухлĕ койкăсен, оборудованин, медикаментсен запасĕ пур. Çакăн çинчен ку эрнере журналистсене ТР Президенчĕн пресс-службин ертÿçи Лилия Галимова пĕлтернĕ. «Хатĕрлĕх пур. Паянхи куна пирĕн койка вырăнĕсем çителĕклĕ. Сывлăх сыхлав системи çак ĕçе йĕркелес тĕлĕшĕнчен системăна лайăх алла илнĕ», – тенĕ вăл. Пресс-секретарь сăмахĕсемпе, медицина учрежденийĕсене кирлĕ медикаментсемпе тивĕçтерес ыйтăва Тутарстан ертÿçисем тимлĕхре тытаççĕ.

**Нумай ачаллисене – çĕр.** Тутарстанра 66 пине яхăн нумай ачаллă çемье çĕр участокĕ илмелли списока кĕнĕ. Вĕсенчен 42 пинĕшĕ участоксене харпăрлăха илнĕ. Çав вăхăтрах çĕнĕ участоксем çитменни сисĕнет. Сăмахран, Хусанта 9 пин ытла участок кирлĕ, Çырчаллинче – 5 пин. Азьмушкино, Семекеево, Ильбухтино, Калмаш ялĕсенчи муниципаллă массивсене йăлтах йышăнса пĕтернĕ. Нумай ачаллă çемьесене парăнакан участоксем тупас тесе Тукай районĕнчи Калмаш ял хутлăхĕнчи массивсене тишкереççĕ. Унсăр пуçне Çĕр пурлăхĕн министерствин ертÿçи çĕр участокĕсене сахал уйăрнă районсене палăртнă. Пĕкĕлме, Ешĕлвар, Элмет, Павлă, Кукмор, Лайăш, Анат Кама районĕсенче нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсем парасси 80 процентран сахалтарах.

**Элкел районĕнче Уява хатĕрленеççĕ.** Çĕнĕ Сувар хулашне тума тытăннă. Çак туристсене илĕртекен объекта Сиктĕрме-Хусанкай ялĕ çывăхĕнчи Уяв пулмалли лапам çумĕнче хăпартма тытăннă. Экскаваторсемпе крепость стенисен никĕсне чаваççĕ, арматура çыхса бетон яраççĕ. Çуркуннене хатĕрлесе çитересшĕн. Юр ирĕлсенех 7 гектара яхăн лаптăка хупăрласа илекен стенана хăпартма пуçламалла. Телее, бетонран керамблок кирпĕчĕсем çапакан цех ялтах ĕçлет. Шалта йывăç çуртсемпе керменсем пулаççĕ. Вĕсенче Тутарстанри, Элкел тăрăхĕнчи ялсен капăрлăхне кăтартма палăртнă. Пĕренесене цилиндрласа «чутласа» кăларакан станок та туяннă «Хузангаевский» ял хуçалăх пĕрлешĕвĕнче. Ĕçле кăна!

Уява хатĕрленес ĕçе сиктĕрмесем районти кашни чăваш ялне явăçтарасшăн. Ку Раççей шайĕнчи мероприяти вăл Хусанкай ентешĕсемшĕн хăйне евĕр тĕрĕслев те. Элкел районĕнчи Чăваш наципе культура центрĕн ертÿçин Евгений Чугуновăн сăмахĕсемпе, хальлĕхе мĕнпур ĕçе вырăнти ял хуçалăх предприятийĕн вăйĕпе туса пыраççĕ.

# ПАЯН ЦИФРА ХУÇА Е МĔН ТАРАН УЛШĂНĔ-ШИ ПИРĔН ПУРНĂÇ?

## Цифровизаци çулталăкĕнче хулапа ял хушшинчи цифра танмарлăхне пĕтерме палăртнă

ГОД ЦИФРОВИЗАЦИИ В РЕСПУБЛИКЕ ТАТАРСТАН
ТУТАРСТАН РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЦИФРОВИЗАЦИ ÇУЛТАЛĂКĔ

**2022 çула Тутарстанра Цифровизаци çулталăкĕ пек палăртман пулсан çак ĕç кăçал мĕнле шайра пурнăçланса пырĕччĕ? Проектсемпе мероприятисен, ĕç планĕ çакăн пекех калăпăшлă та сулмаклă пулатчĕши? Палăртнă ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртме профильлĕ министерствăсăр пуçне ытти ведомствăсемпе организацисем мĕн таран хатĕр-ши? Çĕнĕлĕхсене алла илме квалификациллĕ кадрсем пур-и пирĕн? Çак тата ытти ыйтусем çуралчĕç ТР патшалăх управленийĕнчи цифра аталанăвĕпе информаци технологийĕсемпе çыхăну министрне Айрат Хайруллина ТР Правительство Çуртĕнче иртнĕ брифингра итленĕ май. Пресс-конференци январĕн 18-мĕшĕнче пулчĕ.**



*А.Хайруллин.*

Министр сăмахĕпе, асăннă ĕç планĕсĕр пуçне Цифровизаци çулталăкĕнче 130 ытла мероприяти ирттерме тата çыхăну инфраструктурине аталантарса хулапа ял хушшинчи цифра танмарлăхне пĕтерме палăртнă. Тĕп вырăнта вĕрентÿ, сывлăх сыхлав, культура, ял хуçалăх, ытти сферăсене цифровизацилесе тата электронлă услугăсемпе тивĕçтерессин вăхăтне кĕскетсе тутарстансен пурнăç пахалăхне ÿстересси.

### МФЦ пуçĕпех цифра çине куçать

Хальлĕхе патшалăх услугисене мĕнпурне цифрăласа çитермен, çавăнпа ку ĕç малалла тăсăлĕ. «РФ Президенчĕ Владимир Путин пирĕн ума 2021 çулта лартнă плана эпир вăхăтран маларах пурнăçларăмăр, чи анлă усă куракан социаллă пулăшу тĕсĕсене онлайн-формата куçартăмăр. Ку ĕç малалла та тăсăлать. Республикăра тепĕр 253 пулăшăва электронлă формата куçармалла, ăна çулталăк вĕçлениччен туса пĕтересшĕн», – терĕ министр.

Айрат Хайруллин сăмахĕпе, нумай услугăна пăхса тухма пĕр ĕç кунĕ те çителĕклĕ пулĕ. Ку «ылтăн стандарт». Виçĕ кун хушшинче татса памалли ыйтусене «кĕмĕл стандарт» тесе палăртнă, «бронза стандарт» категорие кĕрекен ĕçсене 14 кун хушшинче пăхса тухĕç. МФЦ офисĕсем пĕтĕмпех цифра çине куçаççĕ. Унăн Патшалăх власть органĕсемпе хутшăнăвĕ те пуçĕпех электронлă формата куçать.

### Интернетсăр ял юлмĕ

«Юлашки икĕ çулта эпир питĕ пысăк кăтарту турăмăр, яллă вырăнсенчи социаллă инфраструктура обьекчĕсене пысăк хăвăртлăхлă оптика интернечĕпе çыхăнтартăмăр. 305 яла пĕрремĕш хут оптика çитрĕ, пурĕ 3,5 пин социаллă пĕлтерĕшлĕ объекта интернет çыхăнăвĕпе тивĕçтертĕмĕр», – палăртрĕ министр.

Тутарстан нумай енĕпе Раççейре пĕрремĕш вырăнта. Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсене оптика сÿсĕллĕ пысăк хăвăртлăхлă интернетпа тивĕçтерессипе те. 2022 çулта пĕр шкул та унсăр юлмĕ. 1000 ача вĕренет-и шкулта е 50 ача – пурпĕрех. Шкулсене пысăк хăвăртлăхлă Wi-Fi сечĕпе тивĕçтерме миллиард ытла тенкĕлĕх инвестицилеме палăртнă. Ку вĕрентекене тĕрлĕ гаджетпа усă курма май парса вĕрентĕве интереслĕрех те эффективлăрах тума пулăшĕ.

### Банк вĕрентекене ноутбук парнелет

Айрат Хайруллин пĕлтернĕ тăрăх, «Ак Барс» банк Цифровизаци çулталăкĕнче вĕрентÿ учрежденийĕсене пысăк парне тума йышăннă, вăл учительсене 24 пин ноутбук илсе парать. Республикăри вĕрентекенсен ноутбукĕсем кивелсе çитнĕ, çĕнетме вăхăт. «Ак Барс» банк çапла пысăк парне туса Вĕрентÿ министерствин пуç ыратăвне те сирнĕ. Анчах банкăн лартнă услови те пур – çĕнĕ ноутбука ĕç укçине «Ак барс» банкăн картти çине илсе тăракан вĕрентекене кăна параççĕ.

Республикăра цифровизаципе пыракан ĕçе коммерцилле организаци хутшăннине ТР Президенчĕ Рустам Минниханов ырласа йышăннă. Çавна май халĕ «Татнефть» пек пысăк компанисене те ку ĕçе хутшăнма сĕнеççĕ. Тепĕр енчен ку патшалăх бюджетне те перекетлеме май паратьçке.

### Вĕрентÿри çĕнĕлĕхсем

Министр сăмахĕпе, ку çул тĕлне «Я школьник» платформăпа *(вĕренекене хăйĕн вĕренÿри ĕлкĕрсе пырасларăхне курса тăма, вĕрентекенпе хутшăнма, киле ĕçе тума пулăшать)* усă куракансен шучĕ те палăрмалла ÿснĕ. 2022 çулта çак платформăпа усă курса шкул ачисене психологилле пулăшу пама шутлаççĕ. Унсăр пуçне мобильлĕ приложени ачасене волонтер ĕçне хутшăнса балсем пухма май парать. Тата кăçалтан «Я школьникра» çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисене пĕлессипе конкурс-викторина хута каять. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсене Президент Ĕлкинче пĕлтереççĕ.

Вĕрентÿри тепĕр çĕнĕлĕх – вĕренекенĕн цифра кочĕ, вăл вĕрентÿ контенчĕпе усă курма май парать. Урăхла каласан, шкул ачи хăйне кирлĕ информацие илме е хăйне килĕшекен предметпа хуть те хăш вăхăтра та усă курма пултарать.

Вĕрентекенсем пирки каласан, вĕсене хут ĕçĕнчен хăтарма, ытларах ачасен воспитанийĕпе ĕçлеме майсем туса пама тĕллев лартнă.

### Çĕнĕ професси илесси çăмăлланать

Республикăра пурăнакансен вара цифра экономикин программи пулăшнипе çĕнĕ профессисене вĕренме май пур. 2022 çулта дистанцилле майпа 100 пин ытла çынна цифра трансформацийĕпе çыхăннă курссене вĕрентсе кăларма палăртнă, вĕрентÿ тÿлевсĕр пулать.

5 аслă шкулта цифра кафедри уçăлмалла. Ку студента кăмăла кайнă цифра специальноçне тĕп вĕренÿрен пăрăнмасăр алла илме май парать е, калăпăр, ĕçлекене ĕç вырăнĕнчен пăрăнмасăр. Медицина вĕрентĕвĕнче унпа усă курма пуçланă та ĕнтĕ. Паянхи врачăн медицина пĕлĕвĕсĕр пуçне цифра технологийĕсене те аван чухламалла. РКБра, сăмахран, ковид патологине искусствăлла интеллект пулăшнипе тĕпчеççĕ.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**Ирина ТРИФОНОВА.**
Сăнÿкерчĕк prav.tatarstan.ru сайтран.

юбилей: Тутарстанăн пĕрремĕш Президенчĕ 85 çулта

# МИНТИМЕР ШАЙМИЕВПА ТĔЛ ПУЛНĂ САМАНТСЕМ

## Тутарстансем ахальтен мар вĕттинчен пуçласа ватти таран ăна «бабай» тесе хисеп тăваççĕ

**Минтимер Шаймиев Раççей историйĕнче пĕлтерĕшлĕ те паллă вырăн йышăнать. Тутарстан Республикин çĕнĕ тапхăрти историйĕ те ун ячĕпе тачă çыхăннă. Ун команди тăрăшнипех Тутарстан суверенлă республика пулса тăрасси мирлĕ иртрĕ. Тĕрĕссипе республикăпа пĕрремĕш Президента пĕр-пĕринчен уйăрммăн хак пама та çук. Минтимер Шариповичăн кун-çулĕ республикăн шăпипе пĕр çыхăмра. 1991 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 2010 çулхи январĕн 22-мĕшĕччен Президент должноçĕнче вăл Тутарстанăн пур енлĕ аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçлерĕ. Полномочийĕсем тухма икĕ уйăх юлсан хăйĕн кандидатурине Президент суйлавĕнчен илме ыйтрĕ. Ун чухне вăл 73-реччĕ. Президент постне хăварнă хыççăн та тăван Тутарстаншăн ĕçлеме пăрахмарĕ вăл. Патшалăх Канашçи пулса пысăк та курăмлă ĕçсем туса пырать. Вăл тăрăшнипе Аслă Пăлхар тата Свияжск утрав-хулан музей-заповедникĕсем йĕркеленчĕç, Хусан Кремлĕ ЮНЕСКО еткерĕсен шутне кĕчĕ. Минтимер Шаймиев тăрăшнипе Хусан хулинче метро хута кайрĕ. Паянхи аталанăвăн çулне те вăлах хывса хăварчĕ, çавна Рустам Минниханов тивĕçлĕ малалла тăсать. Шаймиевăн ĕçĕсен списокне нумай тăсма пулать. Минтимер Шариповичăн биографине тепĕр хут çырса пама кирлĕ мар пулĕ. Ăна пурте пĕлеççĕ тата интернет-ресурссенче те кирлĕ информаци йăлтах пур.**



*М.Ш.Шаймиев Роман Трифоновпа, 2009 çул.*

### Ырă бабай

Тутарстан чăвашĕсемшĕн те Минтимер Шаймиев чылай ырă ĕç турĕ. «Сувар» хаçата та вăл хушнипех 1993 çулта Министрсен Кабинечĕ кăларма йышăнса учредитель пулса тăчĕ. Чăвашсен историйĕ Аслă Пăлхарпа тачă çыхăннине те лайăх пĕлет вăл, çавна май «Аслă Пăлхар» музей-заповедника йĕркеленĕ çĕре чăвашсене хутшăнтарма хирĕç марччĕ. Археологсем чавса кăларнă масар чулĕсем чăвашла вуланнине те пĕрре мар каланă вăл. Анчах ку ĕçре хамăр мехел çитереймерĕмĕр, чăвашсенчен инвесторсем тупăнмарĕç. Халь йĕнин мĕн усси?

Анчах материал кун çинчен мар. Январĕн 20-мĕшĕнче Минтимер Шарипович 85 çулхи юбилейне палăртрĕ. Актаныш районĕнчи Аняково ялĕнче çуралса ӳснĕ тутар ачин мăнаçланмалли те, савăнмалли те пайтах. Мăшăрланса çемье çавăрнă, ывăлсем ӳстернĕ, мăнуксем ăрăва малалла тăсаççĕ, политикăра çирĕп карьера тунă, республика аталанăвĕшĕн курăмлă та пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тунă. Анчах чи хакли – çын хисепне, юратăвне çĕнсе илни. Çакăнтан та пысăкрах телей пур-и тĕнчере? Çук пулĕ. Тутарстанра пурăнакансем ахальтен мар вĕттинчен пуçласа ватти таран ăна «бабай» тесе хисеп тăваççĕ.

### «Чирленĕччĕ-им?»

Журналист пулнă май, мана та Минтимер Шаймиевпа темиçе хутчен çывăххăн калаçма тӳр килнĕ. Министрсен Кабинечĕн аккредитациленнĕ корреспонденчĕ пулнă май, республика ертӳçипе иртекен мероприятисене тăтăш çӳреме тиветчĕ. Пĕррехинче темле майпа çур çула аккредитацисĕр тăрса юлтăм. Çак хушăра, паллах, официаллă мероприятисене çӳреймен. Çĕнĕрен Президент пулне кĕнĕ хыççăнхи пĕрремĕш мероприяти халĕ те асра. Вăл Хусан Ратушинче иртрĕ. Республика ертӳçине кĕтсе çынсем анлă фойере кĕпĕрленсе тăнă. Камерăллă, фотоаппаратлă, диктофонлă журналистсем те кунтах хĕвĕшеççĕ. Тем вăхăтран халăх шăпланчĕ. «Шаймиев килчĕ», – илтĕнчĕ унтан та кунтан. Президента çывăхрах курас тесе çынсем чĕрĕ коридор умнерех тухма тăрăшаççĕ. Юрать пирĕн, журналистсен, ун пек ирĕк пур, эпир ялан малти ретре. Ак хайхи Шаймиев хăй те курăнса кайрĕ. Утнă май çынпа ал тытса сывлăх сунать. Хăшне ятранах чĕнет. Журналистсен çывăхне пырсан вăл хуралçисене сирсех ман енне аллине тăсрĕ: «Э-э, кызымкка, сана тахçантанпа курман, чирленĕччĕ-им?» – терĕ вăл кулса алла чăмăртанă май. Тĕлĕнсех кайрăм, ара, халиччен республикăри пĕрремĕш çынпа çывăх калаçса та курман. Мероприятисене çӳренĕ ĕнтĕ. Çакăнтан Минтимер Шарипович çынна сăнран лайăх астуса юлнине пĕлтĕм. Çур çул çӳремен хыççăн çапла саламларĕ вăл мана.

### Çумăртан хăтарчĕ

Тепĕр хутĕнче çумлăн пĕр ялсем евĕр калаçсах тăтăмăр вара. Пире Айрат Хайруллинăн Алексеевски районĕнчи «Красный Восток» хуçалăхне кăтартма пресс-тур йĕркеленĕ. Вăл Минтимер Шаймиев хутшăннипе иртрĕ.

Ӳкерчĕксем çапла пуян тухăçлă хирсене пăхса. Пĕр çĕрте акса ӳстернĕ тырпулăн куравне те йĕркеленĕ. Тăрук çиçĕмле хăвăртлăхпа çанталăк пăсăлма пуçларĕ. Васкасан та çул хĕррине лартса хăварнă автобуссем патне çитме çук. Аслати кĕмсĕртетрĕ, çумăрăн пĕрремĕш тумламĕсем ӳкме пуçларĕç. Запаслă иккен çынсем, пурте тенĕ пек зонтик илнĕ. Ман кăна нимĕн те çук, ăшă куртка та пулин илмен. Çумăр чашлаттарса çума пуçларĕ. «Мĕн пăхса тăратăр, кунта ача çумăр айне пулнă, кызымкка, кил çакăнта», – терĕ хайхи Президент мана чĕнсе. Хăюсăррăн тăратăп пăхса. «Кил, кил атя», – хистесех чĕнчĕ Минтимер Шарипович. Президент хушнă хыççăн темиçе хуралçă харăсах ман çийĕн зонтикĕсене уçас терĕç те, анчах кая юлчĕç – эпĕ Президентăн сарлака зонтикĕ айне пытантăм. Çумăр çунă хушăра Минтимер Шарипович ача чухне ялта тырă ӳстернисене аса илсе каласа пачĕ, манран та хăш ялтан пулнине ыйтса пĕлчĕ, чăвашсемпе интересленчĕ тата сывлăхла упрама хушрĕ. Çапла çумăр чарăниччен калаçса тăтăмăр.

### «Кам ачи ку?»

Тепĕр пулăм чутах трагедипе вĕçленмерĕ. «Татнефть-арена» умĕнче «Пурçăн çул» ралли-рейд старт илнĕ самант. Эпир, журналистсем, Тутарстан Президентне кĕтсе тăратпăр. Унпа пĕрле Туркменистан ертӳçи килессине те пĕлтерчĕç. Хальхинче хурала тата та вăйлатнă. Журналистсен те хурал «сăнчăрĕнчен» каçма ирĕк çук. Эпĕ вара хампа пĕрле ывăлăма илнĕ, ун чухне вăл тăваттăраччĕ. Машинăсене пит юратакансккере тĕнче шайĕнчи ралли-рейда кăтартас килнĕ ĕнтĕ.

Часах президентсем килни курăнчĕ. Ак хайхи, ман ача алран вĕçерĕнчĕ те тӳрремĕнех президентсем енне чупрĕ. Хуралçăсем харăссăн ачана тытас тесе туртăнчĕç. Лешĕ вара ним пĕлми чупать те чупать. «Кам ачи ку?», «Мĕн тĕллевпе ăна хăвăртан вĕçертнĕ?» – хаяр саспа ыйтаççĕ вĕсем тăракансенчен. Ывăлăма чĕнетĕп – вăл илтмест. «Турăçăм, персе пăрахаççĕ пулинех», – вĕçсе иртрĕ пуçра хăрушă шухăш. Пĕр хуралçи пилĕкĕнчен çакнă кобурăна аллипе тĕкĕнчĕ, çав самантра Шаймиев уттине хăвăртлатса ушкăнран уйрăлчĕ те ачана хирĕç пычĕ. Ман ывăл ăна пырсах çапăнчĕ те тăп чарăнчĕ.

«Кам ачи эсĕ?» – ыйтрĕ ывăлăмран Минтимер Шарипович. Ывăл ман енне пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ. Çисе ярас пек пăхрĕç ман çине хуралçăсем. «Эппин пире сăн ӳкер пĕрле, сăн ӳкересшĕн пулчĕ-тĕр-ха?» – çемçен калаçрĕ Президент куç хĕссе. Чĕтрекен алăпа ывăлăмпа Шаймиева сăн ӳкертĕм. Президент автографĕллĕ сăнӳкерчĕк халĕ те упранать килте. Автографне кайран илнĕччĕ.

«Ну, ачамккă, Президент пулатăнах пулĕ», – шӳтлерĕ Минтимер Шарипович ачана пуçĕнчен лăпкаса. «Юрĕ, дедуля», – лаплаттарса хучĕ ывăлăм. Вăт çапла килсе тухрĕ ун чухне. Шаймиев урăхларах çын пулнă пулсан темле вĕçленĕччĕ ку пулăм?

Каярах Петĕр Хусанкайăн Сиктĕрме-Хусанкайри музейĕнче калаçнăччĕ. Ун чухне Шаймиев халăх поэчĕн кун-çулне лайăх пĕлнипе тĕлĕнтернĕччĕ.

Минтимер Шарипович президент постĕнчен кайсан унпа тата темиçе хутчен те тĕл пулнă. Çынпа вăл яланах ырă та ахальлĕн калаçать. Хăйне мăнна хуни çук. Çăннипех те пирĕншĕн вăл ырă та аслă бабай.

Минтимер Шариповича 85 çулхи юбилейпе пĕтĕм чăвашсенчен ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей сунас килет. Канлĕ ватлăх тесе хушас килет те, анчах ĕççĕр ларайманскере апла каласан пырать-ши? Çавăнпа ăна мĕн шутланине пурнăçлама вăй-хал, çирĕп сывлăх тата çемьепе çывăх çынсен чун ăшшине сунатпăр.

**Ирина ТРИФОНОВА.**
Автор архивĕнчи сăнӳкерчĕк.

дакар – 2022

## Дмитрий НИКИТИН:

# «ПАЯНХИ КУНА ПИРĔН КОМАНДА РАЛЛИ-РЕЙДСЕНЕ ХУТШĂНАКАНСЕНЧЕН ЧИ ОПЫТЛИ ШУТЛАНАТЬ»

Çĕнтерес, хамăр болельщиксене савăнтарас килни пысăк результатсем кăтартма май парать пире

**Халăхăн ытларах пайĕ Çĕнĕ çулпа Раштав уявĕсенче канупа киленчĕ пулсан, теприсем çак вăхăтра нихçанхинчен вăйлăрах тар тăкрĕç. Тĕслĕхрен, Çырчаллинчи «КАМАЗ-мастер» командăн спортсменĕсем. Вĕсем Çĕнĕ çула хăçан килте, çемьепе пĕрле кĕтсе илнине те маннă пулĕ. Мĕншĕн тесен шăпах Çĕнĕ çул уявĕсен вăхăтĕнче халăхсен хушшинчи «Дакар» ралли-рейд иртет. Кăçал вăл историре 44-мĕш хут январĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа 14-мĕшĕччен каллех Сауд Аравийĕнче иртрĕ. Çырчаллинчи «КАМАЗ-мастер» команда 4 экипажпа кайса грузовиксен хушшинче Раççей чысне хӳтĕлерĕ.**



*Дмитрий Никитин (сылтăмра) хăйĕн экипажĕпе – Антон Шибалов пилотпа тата Иван Татаринов механикпе.*

Эпир ентешĕмĕрсем кашни çулах çĕнтерӳпе таврăннине хăнăхнă ĕнтĕ. Ралли пуçлансан кашни тапхăрăн результачĕсене чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. «КАМАЗ-мастер» тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хăйĕн чи лайăх, пысăк опытлă спортсменĕсене ярать. Кашни ăмăртуран малти вырăнсемпе таврăннине пăхсан пирĕн каччăсем тăвайман ĕçсем, тухайман çулсем, çĕнтереймен конкурентсем çук пекех туйăнать. Ăмăртусене çиелтен пăхса хаклакансене çав çĕнтерӳсем çăмăллăн парăннă пек те туйăнма пултараççĕ. Çук иккен. Раллие хутшăнакансем каласа панă тăрăх, «Дакар» çулран çул кăткăсланса пырать. Уйрăмах çак халăхсен хушшинчи ралли-рейдăн директорне Давид Кастерăна лартнăранпа. Вăл, хăй те раллисене малтан штурман, унтан пилот пек нумай хутчен хутшăннăскер, ăмăртусене интереслĕрех, кăткăсрах иртерме тăрăшать. Çакă спортсменсене хавхалантарать кăна.

Кăçалхи «Дакар» та çăмăл пулмарĕ. Нумай йывăрлăх урлă иртме тиврĕ спортсменсен. Нумайăшĕ финиша çитеймерĕ. Пирĕн ентешĕмĕрсем, «КАМАЗ-мастер» команда спортсменĕсем, финиша çитрĕç кăна мар, çĕнтерӳçĕсен подиумне пĕтĕмпех хăйсем йышăнма пултарчĕç. Дмитрий Сотников экипажĕ – 1-мĕш, Эдуард Николаев – 2-мĕш, Антон Шибалов – 3-мĕш. Андрей Каргинов подиум çине лекеймерĕ, анчах та вăл та кăтартăвĕпе 4-мĕш вырăнта. Апла-тăк ентешĕмĕрсем акă ĕнтĕ миçемĕш хут пирĕн «Камазсем» чи шанчăклă автомобильсем, хăйсем чи вăйлă, опытлă спортсменсем пулнине çирĕплетсе пачĕç. Ăмăртăва интернетра сăнанă май хамăрăннисем пĕрремĕш тапхăрсенчех малти вырăнсем йышăнма пуçласан вĕсем çĕнтересси пирки иккĕленмерĕмĕр те темелле.

«КАМАЗ-мастер» команда хутшăнакан ăмăртусене «Сувар» вулаканĕсенчен нумайăшĕ тимлĕ сăнать. Хаçатпа тахçанах туслисем пĕлеççĕ ĕнтĕ – тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнакан экипажсен йышĕнче чăваш пур, вăл – Дмитрий Никитин. Çырчаллинче çуралса ӳснĕ çамрăк раллисене Антон Шибалов экипажĕнче штурман пулса хутшăнать. Иртнĕ вырсарникун Сауд Аравийĕнчен таврăнсанах эпир Дмитрий Николаевичпа çыхăнса ăна çĕнтерӳпе саламларăмăр, кăçалхи «Дакар» пирки хăйĕнчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлтĕмĕр. Вăл хаваспах пирĕн ыйтусем çине хуравларĕ.

**– Тĕпрен илсен мĕнпе асра юлчĕ саншăн кăçалхи ралли?**

– «Дакарта» нихçан та çăмăл пулман теççĕ. Раллин тĕп тĕллевĕ çавă-çке-ха – çулсăр-мĕнсĕр, чуллă трассăсенче, чăнкă та йывăр хăйăр куписемлĕ, пурнăç çук пушхирсенче техникăн, спортсменсен чăтăмлăхне тĕрĕслесси. Кăçалхи «Дакар» та çăмăл пулмарĕ. Юлашки тапхăрăн финишне çитиччен те лăпланаймарăмăр. Эпир ăмăртури тĕрĕслевсене малтанах кăмăл-туйăмпа та, ӳт-пĕве çирĕплетсе те хатĕрленетпĕр. «Дакар» директорĕн Давид Кастерăн ĕçĕнчен тĕлĕнме пăрахмастăп, вăл ертсе пыма пуçланăранпа ăмăрту пур енчен те лайăхланчĕ: маршрутсене йĕркелес енĕпе те, навигаци хатĕрĕсене çĕнетессипе те, раллие хутшăнакансене бивуаксене вырнаçтарас тĕлĕшпе те.

**– Кăçалхи «Дакара» хутшăнакансем валли йĕркелӳçĕсем нумай сюрприз, кăткăс трассăсем хатĕрленĕ. Малтанхи тапхăрсенчен пĕринче навигаци точкисене кăткăслатнипе штурмансене уйрăмах йывăр килчĕ. Ун чух Шибаловăн экипажĕ пуринчен малтан навигаци вăрттăнлăхĕсен тупсăмне тупма пултарнă терĕç...**

– Тĕпрен илсен, кăçалхи ăмăртура пĕр кун та навигаци тĕлĕшпе çăмăл пулмарĕ. Малтанхи тапхăрсенчен пĕринче, чăн та, уйрăмах йывăр килчĕ. Кăçал машинăсен, баггисен тата грузовиксен зачечĕсенче старта тухас йĕркене улăштарнă. Унччен пĕрремĕш кун кам миçемĕш финиша çитнĕ, тепĕр кун çавăн пекех старта тухатчĕ: малтанхи 10 хутшăнакан – пĕр-пĕрин хыççăн 3 минут интервалпа, вĕсен хыççăнхисем – 2-шер минутран, юлашкисем – 30 çеккунтран. Пирĕн грузовиксем трасса çинче пысăк хăвăртлăхпа пыма май параççĕ, çавăнпа та пĕр кунри тапхăрта 10 вăйлă экипаж йышне лекесси йывăр марччĕ. Анчах та икĕ çул каялла йĕркелӳçĕсем пĕрремĕш грузовике старта тухма 21-мĕш позицие (20 джип хыççăн) антарса лартрĕç. Кăçал вара пире пачах та 51-мĕш хутшăнакан таран антарчĕç. Пĕр кунĕнче 80-мĕш те хускалса кайма тиврĕ. Çавăнпа пирĕн командăн ертӳçисен ытти командăсен тим-менеджерĕсемпе калаçса грузовиксене каялла 50-мĕш позицие те пулин таврăрма ыйтса коллективлă çыру çырчĕç. Пуринчен кайран хускалса кайсан пире хамăр умра пыракан машинăсене нумай хутчен хăваласа çитсе иртсе кайма тивет-çке-ха. Ку вара вăйлă тусан çĕкленнине кура хăрушсăр мар. Сан умăнтан темĕн чухлĕ машина хускалса кайнă чух умри çул çинче ним те уйăрса илме çук: тем чухлĕ йĕр, хăшĕ тĕрĕс, хăшĕ йăнăш çулпа кайнă – пĕлме çук. Навигаци тĕлĕшпе чи кăткăс пулнă тапхăрта пире ыттисенчен ытларах ăнчĕ – тĕрĕс çул хăвăртрах тупса финиша часрах çитрĕмĕр.

**– «КАМАЗ-мастер» спортсменĕсем чи малтан кашни хăй çинчен мар, команда çинчен шутланипе тĕлĕнтереççĕ, мăнаçлантараççĕ. Ак, хальхинче те Эдуард Николаев малта пыракан Дмитрий Сотников путса ларсан чарăнса ăна пулăшни нумайăшне тĕлĕнтерчĕ. Ара, вĕсем пĕр командăра пулсан та чи малтан конкурентсем-çке-ха?**

– Паллах, командăра шалти конкуренци пурах ĕнтĕ вăл. Анчах та «Дакарта» эпир хамăрăн амбицисене пытарса чи малтан командăшăн кĕрешме йышăннă. Тен, Николаевăн экипажĕн те чарăнмасăр иртсе каяс килнĕ пуль, çакă, ман шутпа, йĕркеллĕ пулăм. Анчах та Эдуард çакăн пек лару-тăрура мĕн тумалла – çавна тунă. Урăхла вариант пулма та пултарайман. Ку пирĕн командăн пĕрлехи чун хавалĕ.

**– Хальхинче сире çак раллире çĕнтерме мĕн пулăшрĕ?**

– Паянхи куна пирĕн команда ралли-рейдсене хутшăнакансенчен чи опытли шутланать. Çавăнпа та чи малти вырăнта, паллах, опыт. Эпир машинăсене пысăк пахалăхпа тума вĕренсе çитнĕрен трассăсем çинче техника ваннипе чарăнса вăхăта çухатмастпăр та темелле. Тата, паллах ĕнтĕ, çĕнтерес, хамăр болельщиксене савăнтарас килни пысăк результатсем кăтартма май парать пире.

**– Эсĕ хăвăн экипажупа пĕрле тĕнче шайĕнчи ралли-рейдсенчен яланах çĕнтерӳпе таврăннине хăнăхнă ĕнтĕ «Сувар» вулаканĕсем. Кăçалхи «Дакар» саншăн миçемĕш пулчĕ? Эпир астăвасса кашнинчех çĕнтерӳпе таврăнатăр вĕт?**

– Ку «Дакар» маншăн юбилейлă – 5-мĕш. Тăватă хутчен çĕнтерӳпе таврăнтăм – пĕрре бронза бедуинпа, виçĕ хутчен кĕмĕлпе. Вулакансем астăваççĕ пулсан, хамшăн чи малтанхи «Дакарта» эпир машина çуннипе финиша çитейменчĕ. Чи пысăк çĕнтерӳ пулаймарĕ-ха хальлĕхе.

**– 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсем те япăх кăтарту мар вĕт кун пек тĕнче шайĕнчи ăмăртусенче...**

– Çаплине çапла та, анчах та яланах чи малти вырăн патне талпăнатпăр çке-ха...

**– Дмитрий, пĕтĕм вулакан ятĕнчен сана малашне те пысăк çитĕнӳсем тума, ăмăртусенчен яланах çĕнтерӳпе таврăнма ăнăçу сунатпăр!**

– Пысăк тав! Эпĕ сирĕн тĕревĕре яланах туйса тăратăп, çавăнпа кашни ăмăртура пĕтĕм вăя, опыта хурса тăрăшатăп.

**Вера АЛЕКСАНДРОВА.**
**Д.Никитинăн** харпăр архивĕнчи сăнӳкерчĕк.

юбилей

**Володар Аркадьевич Тимофеев Теччĕ районĕн Чăваш наципе культура центрĕнче 2008 çултанпах. Тăрăшулăхĕпе хастарлăхне, тăван халăха юратнине кура обществăлла ĕçре тăрăшакан ĕçтешĕсем ăна 2013 çулта пĕр саслăн пулса Теччĕ муниципаллă районĕнчи Чăваш наципе культура центрĕн ертӳçине суйларĕç. Ертӳçĕ тилхепине тытнă пĕрремĕш кунранах вăхăтне хĕрхенмесĕр тата тĕп ĕçне пăхмасăр обществăлла ĕçре ырми-канми тăрăшать.**



*В.А.Тимофеев.*


*А.Тимофеев А.Харитоновăпа.*

# ÇУРАЛНĂ ВЫРĂНТА ПУРĂНАССИ – ТЕЛЕЙ

## Теччĕ районĕнчи ЧНКЦ ертӳçи Володар Аркадьевич Тимофеев Чăваш халăх поэчĕпе Петр Петрович Хусанкайпа пĕр кунра çуралнă

Володар Аркадьевич Теччĕ çынниех, И.Я. Яковлевпа вĕсем иккĕшĕ те кăннакушкисем. 1952 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. Ашшĕпе амăшĕ мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕрен-ши ĕç çулне 15 çултах пуçланă, тăван ялти Ленин ячĕллĕ колхозра ĕçленĕ. Салтакран килсен те телей шыраса аякка кайман. Тăван колхозрах ĕçе малалла тăснă, çав вăхăтрах Хусанти ял хуçалăх институтĕнче экономист-организатора вĕренсе тухнă. Алла диплом илсен Ленин ячĕллĕ колхозрах пай пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ.

Пултарулă çамрăка кĕçех район та асăрханă: 1978 çулта Теччĕ район Канашĕн ĕçтăвкомĕн план комиссийĕн ертӳçине, 1982 çулта Районти халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен управленийĕн директорне лартнă. 1995 çулта хăй ĕçне йĕркеленĕ.

В.А.Тимофеев ЧНКЦ председателĕн тивĕçне пурнăçлама тытăннăранпа Канашăн чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе культурине сыхласа хăварса аталантарас, районти ялсенче пурăнакан чăвашсене чăмăртас енĕпе ĕçĕ самай хастарланчĕ. 2014 çулта, тĕслĕхрен, Володар Аркадьевич пуçарăвĕпе Кăнна Кушкинчи шкул çумĕнче Тутарстанри чăваш ачисем валли çуллахи лагерь ĕçлерĕ. 200 пин тенкĕ хăй укçине тăкакларĕ вăл çак сăвапла ĕç çине. Çав çулах халăх ыйтнипе ытти предпринимательсемпе пĕрле тăван ялта мемориал комплексне (унта И.Я.Яковлев çуралнă вырăнти часавай та кĕрет) тума пулăшу панă.

Обществăлла организацин ертӳçи хăйĕн ентешĕн И.Я.Яковлевăн ятне ĕмĕрлĕхе хăварас, халалĕсене пропагандăлас ĕçе хастар илсе пырать. Теччĕри Чăваш наципе культура центрĕ Тутарстан, Чăваш Ен культура министерствисемпе, ТР Халăхсен ассамблейипе, Чăваш наци конгресĕпе тата ТР ЧНКАпа пĕрле И.Яковлевăн 160, 165, 170 çулхи юбилейĕсене Кăнна Кушкинче анлăн паллă турĕ.

Володар Аркадьевич тăван чăваш чĕлхине упраса хăварас ыйтăва та пысăк тимлĕх уйăрать. Хальхи вăхăтра Теччĕри 7 шкулта тăван чĕлхепе литературăна вĕрентеççĕ. ЧНКЦ çуллен апрель уйăхĕнче Чăваш чĕлхи кунне шкулсенче уявлама хутшăнать. Çаплах паллă ентешсен Александр Алкан, Иоаким Максимов-Кошкинскин, Тихăн Петĕркин, Александр Тимпайăн, Серте Мишшин, Николай Сорокинăн юбилейĕсене паллă тăвассине те йăлана кĕртнĕ.


*Шкул ачисемпе.*


*«Шуçăм» ансамбль.*

Вăл пуçарнипе район чăвашĕсем Çармăс тата Аслă Ăнă ялĕсенче – Çăварни, Чăваш Чакăлтăмĕнче – Çимĕк, Кăнна Кушкинче Чӳклеме ирттерчĕç. Теччĕ хулинчи «Шуçăм», Çĕньял, Чăваш Чакăлтăмĕ, Çармăс, Пухтел, Кăнна Кушкинчи Культура çурчĕсен çумĕнче йĕркеленнĕ пултарулăх ушкăнĕсем çак уявсен илемĕ. Çăварнири «Теччĕ шевлисем» фестивальте вĕсем пултарулăх кăтартасси çирĕп йăлана кĕчĕ.

Володар Аркадьевич ырă кăмăллă, тарават çын. Ĕçтешсемпе хисеплесе калаçать, пĕр çынна та тимлĕхсĕр хăвармасть. Пурнăç çине шанса пăхнипе хисеплеççĕ те ăна ĕçтешĕсем, район, хула ертӳçисем, район халăхĕ. Район канашĕн депутатне те пĕрре мар суйланă ăна, мĕншĕн тесен районăн социаллă экономика ыйтăвĕсене татса пама хастар хутшăнать. Районăн бюджетпа предпринимательство комиссийĕн председателĕн çумĕ те, район Канашĕн президиумĕн пайташĕ те вăл.

Обществăлла ĕçе вăл тĕп ĕçне кансĕрлемесĕр илсе пыма ĕлкĕрет. Районти чи ăнăçлă ĕçлекен предпринимательсенчен пĕри шутланать. Тен, çавăнпах пуль акă ĕнтĕ нумай çул районти предпринимательствăпа пĕчĕк харпăрлăха аталантаракан канашăн председателĕ.

Районти чăвашсен культурăллă пурнăçне лайăхлатассипе малашнехи планĕсем пысăк унăн, пурнăçа кĕртме кăна Турри пулăштăр тата хăйĕн мехелĕ çиттĕр.

**Альбина *ХАРИТОНОВА.***
Теччĕ районĕнчи ЧНКЦ хастарĕ.

юбилей

# ЭТЕМ ПУЛНИНЧЕН СУМЛĂРАХ ЧЫС ПУР-ШИ?

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 №).

## Ĕмĕт

Вешкаймăри тапхăр Петр Петровшăн – чи йывăр та тухăçлисенчен пĕри. Хыçра 15 çултан тăракан ĕç биографийĕ.

Унччен – ачалăхĕ тата матрос пулас ĕмĕчĕ. Хăçан-тăр вăл ашшĕ çар морякĕсен паттăрлăхĕ çинчен каласа панине касса кайсах итлетчĕ. Иван Сергеевич нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан хĕрӳ çапăçусене хутшăннă, фронтран тельняшкăпа тата бескозыркăпа таврăннă. Петя пĕчĕкрен тинĕс çарĕпе çыхăннă мĕнпур япалана пуçтарнă. Хаçат-журналсенче пичетленнĕ сăнӳкерчĕксемпе статьясене касса кăларса пуçтарса пынă, почта маркисене пухнă, тĕлĕкре те хăйне канатсем тăрăх мачта тăррине хăпарнă пек курнă.

Пĕррехинче пиратсемпе çапăçнă. Ун аллинче çивĕч хĕç, вăл унпа ютсене касать пек. Капитан çӳлте кĕпер çинче тăрса матрос паттăрлăхĕпе мăнаçланать. Анчах та пиратсем Петьăна хыçалтан ярса илчĕç те уран ӳкересшĕн. Парăнакансен йăхĕнчен мар вăл – тăрук çаврăнса тăшмана хĕçĕпе яшлаттарасшăн. Анчах ниепле те май килмест. Куçне уçать те умĕнче амăшне курах каять. Екатерина Алексеевна ăна силлесе вăратасшăн: «Çитет çывăрса, ывăлăм, шкула кайма вăхăт». «Анне, тата 5 минут!» – тет вăл çывăрса кайса тĕлĕкне курса пĕтерес шухăшпа. Анчах та ăçта унта – вăранса ыйхине татнă ĕнтĕ…

Элшел вăтам шкулне пĕтерсен Петя Петров инçете кайма çула тухать. Çĕршывăн çурçĕрти тĕп хулине. Шăп Ленинградра Дзержинский ячĕллĕ Аслă тинĕс çар училищи вырнаçнă. Тăван килĕнче ывăлĕн йышăннăвне питĕ лăпкăн йышăнаççĕ. Амăшĕ çула пуçтарать, ашшĕ ăшĕнче ывăлĕпе мăнаçланать. Хăтланса пăхтăр. Кĕрсен çемьешĕн кăна мар, мĕнпур тăваншăн, ял-йышшăн та савăнăç пулĕ, кĕреймесен никам та калаçмĕ. Мускава çити ларса пымалли вакунпа кайрĕ вăл, çуле хăпарса выртрĕ те мĕн аниччен чӳречере мĕлтлетекен ял-хуласем çине пăхса пычĕ. «Мускав – Ленинград» пуйăс ăна хăвăртлăхĕпе тĕлĕнтерчĕ – çеккунтра 20 метр. Ахальтен мар ăна «çĕмрен» (стрела) теççĕ. Петя чӳрече патĕнчен пăрăнмарĕ. Каçпултипе те урамаллах пăхрĕ вăл.

Экзаменсене парса ачалăхри ĕмĕте çывхартма тытăнма шанса пурăнчĕ йĕкĕт. Анчах та таçта аякри чăваш ялĕнчен килсе чун-кăмăлтан вĕренме ăнтăлакан ачана малалла иртермерĕç. Петя пуçласа тĕрĕсмарлăх тенине хăй çинче туйса курчĕ: хура лимузинсем килсе яракан çынсен ачисемпе тупăшма вăйĕ те, майĕ те çук унăн. Анчах та ĕç-пуç ăнманни чирлеттерсе ямарĕ ăна. Сасартăк вăл юратнă ашшĕ шанса каланă сăмахсене аса илчĕ: «Енчен те экзаменсене параймасан кăмăл çирĕплĕхне ан çухат. Тĕллевӳ патне малалла ут, хăюллă пул. Пурнăçра тĕрĕслев сахал мар пулĕ», – терĕ вăл.

## Ĕç биографийĕн пуçламăшĕ

Иван Сергеевич ывăлне тарăхса мар, пысăк ăнланулăхпа лăпкăн кĕтсе илчĕ. Хулана кайса тивĕçлĕ ĕç шыраса пăхма сĕнчĕ. Вăл вăхăтра çĕнĕ професси – телемастер – çуралса пынă кăна-ха. Петровсем, ашшĕпе ывăлĕ, «Телемастерская» тесе çырнă алăка уçса пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе тăчĕç. Çӳлĕксем çинче те, пур кĕтесре те телевизор. Иван Сергеевич, ялта шкул директорĕ пулса вăй хураканскер, ĕçе вырнаçакансемпе еплерех калаçмаллине аван ăнланнă. Ывăлĕ ашшĕ çурăмĕ хыçĕнче тăнă пулсан та хăрах куçĕпе пуçлăха тинкернĕ. Лешĕ вара çăмăл чĕлхепе лăпкăн кăна юсавçа çартан таврăнсан çеç йышăнма хатĕррине пĕлтернĕ.

– Тен, шофера вĕренсе пăхăпăр, – ашшĕ çитĕннĕ ывăлĕн куçĕнчен тинкернĕ.

Петя пуçĕпе сĕлтнĕ. Хăтланса пăхма хирĕç мар эппин.

– Салтакран таврăнсан хаваспах йышăнăпăр, – хăйсен шухăшне пĕлтерчĕç автомобилистсен клубĕнче.

Кӳршĕри чăваш ялĕнчен пысăк, явапллă ĕçпе килнĕ икĕ çын Ульяновскри автомобильсем кăларакан заводăн кадрсен пайне пырса кĕнĕ чухне хĕвел анăçалла пăрăнма та ĕлкĕрчĕ.

– Ученик вырăнĕ пур-ха пирĕн, – кăвак куçлă йăм-хура çӳçлĕ майран кашни сăмахĕнче шанăç пурри палăрчĕ. – Анчах та парти райкомĕн ирĕкĕ кирлĕ.

Петя кадрсен пайĕн ĕçченĕ хăйсене ырă суннине çур сăмахранах ăнланчĕ. Хĕрарăм парти çурчĕ ăçта вырнаçнине те кĕскен ăнлантарса ячĕ.

Автозавод Петр Петрова пурнăç ани çине кăларни пĕр иккĕленӳсĕр. Кунта вăл хăйĕн пĕрремĕш специальноçне илчĕ çеç мар, института кайма направлени илме тивĕçрĕ. Унта вара яш ăслăлăх авăрне «чăмрĕ», çĕнĕ юлташсем тупрĕ, волейболла, футболла вылярĕ, боксла кăсăкланчĕ.

Институтăн хăйĕн çар кафедри. Çакă кунта аслă пĕлӳ илекенсене хĕсмете каяссинчен хăтарнă. Анчах та ĕнерхи студент Петр Петров хăйне çара яма тархасласа ыйтрĕ. Тен, кунта вăл пурнăçĕнче пĕрремĕш хут пуласлăх çулне палăртса хурĕ…

Теветкеллĕ çула суйласа илсе йăнăшмарĕ йĕкĕт. Салтакра Мускав çар округĕнче зенит установкисене алла илчĕ. Çур çултанах лейтенант ятне тивĕçрĕ. Командир пулса служба иртме тытăнчĕ. Икĕ çулта пĕр взыскани те пулмарĕ унăн, тавсемпе хавхалантарусем çеç. Çар тивĕçне пурнăçланă хушăра Петр Петров шалти ĕçсен тытăмĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ çынсен ушкăнне лекни те пĕр кĕтмен çĕртен пулса тухнă япала мар. Хĕсметре хастарлăх, хăюлăх кăтартнипе. Тĕрĕссипе, хăй малтанласа ун çинчен пĕлмен те-ха вăл. Киле кайма вăхăт çитсен илтни илĕртнĕ çамрăка, сĕнĕве пысăк кăмăлпа йышăнса Ульяновскри управление çитме шутланă вăл.

Анчах та чи малтан Пăва районĕнчи Раккассине ашшĕ-амăшĕ патне çитсе килмелле. Пĕвĕпе пысăках мар, сарлака хул-çурăмлă аслă лейтенант тăван ял урамĕпе пуçа çавăракан, ӳсĕртсе яракан уçă сывлăшпа киленсе утрĕ. Хапха умĕнче кĕтсе тăракан амăшĕ савăнăç куççульне пытармасăр пуçне ывăлĕн кăкрĕ çине хучĕ. «Еплерех хăвăрт ватăлаççĕ пирĕн аннесем!» – кĕмĕл тĕслĕ çӳçĕнчен ачашласа амăшне йăвашшăн ыталарĕ ĕнерхи салтак, питçăмартинчен çепĕççĕн чуптуса халĕпе, сывлăхĕпе кăсăкланчĕ. Çурăмĕ хыçĕнче хăш хушăра шкултан хашкаса чупса килнĕ ашшĕн уттине илтрĕ.

– Еплерех паттăр эс! Тĕреклĕ, – хашка-хашка сăмах хушрĕ Иван Сергеевич Петĕрĕн ытамĕнчен тухса. – Çап-çамрăк-ха – аслă лейтенант! Маттур. Маттур. Аннӳпе иксĕмĕр те мухтанатпăр санпа, малашне те çитĕнӳсем сунатпăр.

## Шăпа пӳрнĕ тĕлпулу

Çамрăк ĕçчене управленире районсен пайĕсенчен илсе килекен документсене тĕрĕслеме шанчĕç. Кĕске вăхăтрах тавралăха сас-хура сарăлчĕ: милицире отчетсенчи кашни саспаллие питĕ çирĕп тĕрĕслекен ĕçчен пур. Çĕртме уйăхĕн пĕр кунĕнче пӳлĕме çуллахи çăмăл кĕпе тăхăннă, çӳçне сарă тĕспе сăрланă хӳхĕм курьер кĕрсе тăчĕ. Аллинчи папкине сĕтел хушшинче ларакан Петр Ивановича хăюсăррăн тăсса пачĕ вăл. Пакунлă тĕрĕслевçĕ хăна çине пуçне çĕклемесĕрех, ăçта-мĕнле йăнăшсем тупнине, еплерех тӳрлетмеллине кăтартрĕ те сывпуллашрĕ. Тимлĕн итленĕ пике пĕр сăмах хушмасăрах пӳлĕмрен тухрĕ.

Тепĕр кун та ĕç-пуç çаплах пулса иртрĕ.

– Ыран килĕр, – Петр Петров пуçласа пуçне çĕклерĕ те хăйĕн çине сип-симĕс, тунсăхлă, çав вăхăтрах вичкĕн мăшăр куç пăраласа пăхнине асăрхарĕ.

«Шанса панă вырăну ытла пысăках пулмасан та хăвăр ыйтăвăрсене чуна илме хатĕр», – çапла калас патнех çитрĕ пике, анчах та шарламарĕ. Папкăна илчĕ те алăк еннелле утрĕ.

Инспектор нумайччен вăл тухнă алăк çинелле тинкерчĕ.

Виççĕмĕш кун çитрĕ. Районсенчен килекенсем документсене парса пĕтерсе пычĕç. Анчах пĕринчен курьер çук та çук. Петров пăшăрханма пуçларĕ. Кĕтесрен кĕтесе çӳресе алăк еннелле тилмĕрсе пăхрĕ – Чукун çул районĕнчен килме тивĕçлĕ çынна кĕтрĕ. Йышăну пӳлĕмне шăнкăравласа та кăсăкланчĕ. Ĕç кунĕ вĕçленичен темиçе минут çеç юлнăччĕ – сасартăк телефон шăнкăртатрĕ. Секретарь курьер килнине пĕлтерчĕ.



*П.И.Петров.*

– Ну, тинех, – савăнăçне пытармарĕ пуçлăх. Васкаса сĕтел хушшинчен тухрĕ.

Анчах та хĕпĕртени кăлăхах пулчĕ. Пӳлĕме тӳрккес сăн-питлĕ, кăнттаммăн утакан хĕрарăм кĕрсе тăрсан оперативник пичĕ çинчи кулă çухалчĕ.

Ют хĕрарăмран ĕнерхи пикене мĕншĕн яманнине ыйтса пĕлесшĕн пулчĕ, анчах та калаçу кулăшла пулса тухассине ăнланса хăйне вăхăтра пӳлчĕ.

Сасартăк Петр Иванович документсене тĕрĕслеме тытăнмасăрах хутсен купи çине ывăтрĕ. Васкакан хĕрарăм нимĕн те ăнланаймасăр пăхса тăчĕ-тăчĕ те сывпуллашмасăрах пӳлĕмрен тухрĕ.

Петров малалла хăйне мĕнле тытмаллине пĕлмерĕ. Кĕтмен лару-тăруран тухма майсем шырарĕ. Ĕнерхи чиперккен ятне те, хушаматне те пĕлмерĕ вăл. Сасартăк тем асне килнĕн сиксе тăчĕ – сĕтел çинчи кĕленче айĕнче курьерсен списокĕ выртать. Çапла, çапла: «Чукун çул районĕ – Зоя Николаевна Григорьева». Кашни саспаллине чун-чĕри витĕр кăларса вуларĕ вăл. Çав самантра ӳт-пĕвĕн кашни кĕлетки тăрăх ăшă хум кайнине туйрĕ. Пуканĕ çине лаш ларса пĕр самант хускануçăр пулчĕ. Унтан телефон трубкине илсе Зоя Николаевна патне шăнкăравларĕ.

Вĕсем çав каçах тĕлпулу пирки калаçса татăлчĕç. Анлă Атăл хĕрринчи Шевле (Венец) текен вырăнта. Ĕмĕрхи йывăççен вуллисене, чукун картасене, тротуарсене хăй çутипе çутатса уйăх вăраххăн пĕлĕт çийĕн шурĕ. Унтан вĕтĕ çумăр пуçланчĕ. Унăн тумламĕсем асфальта хăвăрт йĕпетрĕç. Петр Иванович пикен аллинчен тытрĕ те çумăртан пытанма васкатрĕ. Тин çеç вырăн йышăннă беседкăна уçă сывлăшпа киленекенсем кĕрсе тулчĕç. Çисĕм çиçсе аслати авăтрĕ. Унăн шавĕ Çурçĕр Венец çийĕн сапаланчĕ. Петр пиншакне хывса Зойăн хулĕ çине уртса ячĕ…

## Карьера пусмипе хăпарни

Карсун районĕ – Петр Ивановичăн карьеринчи чи пĕрремĕш тĕрĕслев. Пуçлăх çумĕнче вăй хунă май вăл яланах профессионализм теорипе практика опычĕн пĕрлĕхĕ иккенне астуса тăчĕ.

Вешкайма районне йышăнсан умне малтанласа вăрттăнлăхра тытнă тĕллев лартрĕ Петров – пур кăтартупа та хыçалта пыракан хутлăха мала кăлармалла. Йĕркелӳ ĕçне çирĕплетрĕ, кадрсемпе ĕçлессине вăйлатрĕ, пĕлменнисене вĕрентрĕ, хăй те пĕлĕвне ӳстерсех тăчĕ. Никама та хăваламарĕ, анчах та кашни служăбăран шухăшласа, çине тăрса вăй хума, тăрăшма ыйтрĕ. Хура ĕçрен хăрамасăр пур синкерлĕ кăткăс пулăма хăй çитсе курчĕ, тимлĕн тишкерчĕ. Малтанхи икĕ çул хăрушă тĕлĕкри пек иртрĕ. Парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А.Н.Крончев, Вешкайма район администрацийĕн пуçлăхĕ М.С.Агапов хавхалантарчĕç ăна, пулăшрĕç. Милици ĕçне пуçне чикмерĕç вĕсем, анчах та пит тимлĕн сăнарĕç. Кĕçех регионти çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсемпе Вешкайма районĕ мала тухрĕ. Чăнчăн çĕнтерӳ!

ШĔМ академийĕнчен вĕренсе тухнă (1997 çул) Петр Петров облаçри Шалти ĕçсен управленийĕн пуçлăхĕн çумĕн тивĕçне пурнăçлама тытăнчĕ. Ыйтусене пысăк пĕлӳллĕ специалистпа татса парасси хăй телей. Çăмăл çулсем шырамарĕ ентешĕмĕр. Йĕрке хуралĕнче чыслăн, тивĕçлĕн вăй хучĕ. Ултав-суяна, сутăнчăклăха, йĕркесĕрлĕхе тӳсме пултараймарĕ. Мĕнпур пурнăçне халалланă ĕçне чунĕпе, юнĕпе парăнса пурнăçларĕ.

Паян та стройра вăл – тивĕçлĕ канури милици полковникĕ Петр Иванович Петров, юратнă кукаçей тата асатте. Ульяновск облаçĕнчи ЧНКАн Ульяновск хулин Ленин районĕнчи уйрăмне ертсе пырать, туслăха хаклама пĕлет, çивĕч ăсĕпе, пысăк тавракурăмĕпе, çирĕп кăмăлĕпе уйрăлса тăрать. Çак кунсенче ăна юбилейпе саламласа «ШĔМ ветеранĕсен Хисеп Палли» кăкăр паллипе чысланă. Сумлă наградăсен çӳпçинче чи хаклисем – «Тӳрĕ кăмăллă ĕç-хĕлшĕн» (1,2,3-мĕш степеньлĕ) тата «ШĔМ 200 çул тултарни» медальсем.

Петр Ивановичпа тĕл пулма юрататăп эпĕ. Кӳршĕ ялтан пулнипе те мар, калаçса тăранма çуккипе, хăйĕн шухăшĕ çинче тăма пултарнипе, ÇЫН пулнипе.

**Александр БОГАТОВ.**
Ульяновск.
Çемье архивĕнчи сăнӳкерчĕк.

кӗнеке ҫӳлӗкӗ

# УНТА НУРЛАТ РАЙОНӖНЧИ ЧӐВАШСЕМ ҪИНЧЕН ТЕ ҪЫРНӐ

Кӗнекери статьясенче тутар, мари, мордва, удмурт тата чӑваш халӑхӗсен чӗлхе, сӑмахлӑх, культура уйрӑмлӑхӗсене тишкернӗ



Е.Федотова Чӑваш Менчи ялӗнче У.Саватникова каласа панине ҫырса илет. 2008 ҫул.



Ҫӗрӗ яни.

**Хусанти Г.Ибрагимов ячӗллӗ Чӗлхе, литература тата ӳнер институчӗ 2021 ҫул вӗҫӗнче «Калейдоскоп культур» кӗнеке хатӗрлесе ҫитерчӗ. Кӗнекене Тутарстан Республикинчи Тӑван чӗлхесен тата халӑхсен пӗрлӗхӗн ҫулне халаллана мероприятисен шутӗнчи проекта пурнӑҫлана. Проект авторӗ — К.М.Миннуллин, ӑслӑлӑх редакторӗсем – Р.Р.Султанова тата И.И.Ямалтдинов, пухса хатӗрлекенӗ тата яваплӑ редакторӗ – Н.В.Герасимова. Статьясен пуххи ТР Наукӑсен академийӗн издательствинче пичетленсе тухнӑ.**

Кӗнекене ӑслӑлӑх енчен тишкерекен «Калейдоскоп культур» проекта тӗпе хурса Тутарстан Республикинче пурӑнакан халӑхсен йӑли-йӗркине, сӑмахлӑхне тӗпчес енӗпе ирттернӗ комплекслӑ ӑслӑлӑх экспедицийӗсен материалӗсем кӗнӗ. Ҫак сборнике кӗнӗ ӑслӑлӑх статйисенче тутар, мари, мордва (мӑкшӑ), удмурт тата чӑваш халӑхӗн чӗлхе, сӑмахлӑх, культура уйрӑмлӑхӗсене тишкернӗ. Кӗнекене этнографсем, лингвистсем, фольклористсем, историксем, культурологсем, искусствоведсем валли тата Тутарстанти халӑхсен историйӗпе, культурипе интересленекенсем валли ҫырса хатӗрленӗ.

Кӗнеке вырӑсла тухнӑ. Тӗрлӗ халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсене, паллах, хӑйсен чӗлхипе панӑ, вырӑсла куҫарса ӑнлантарни те пур.

Чӑваш халӑхне халалланӑ пайра пилӗк автор статйине пичетленӗ. Вӗсем Нурлат районӗнче пурӑнакан чӑвашсен чӗлхи, йӑли-йӗрки, сӑмахлӑхӗ, кӗвви, культури ҫинчен ҫырнӑ. И.П.Семенова «Этноязыковая культура нурлатских чувашей» статйинче Нурлат чӑвашӗсен чӗлхе культурине тӗпченӗ. Г.Г.Ильина «Фольклорно-этнографические традиции чувашей Нурлатского района Республики Татарстан (по материалам фольклорной экспедиции)» ӗҫӗнче Нурлат тӑрӑхӗнчи чӑвашсен йӑли-йӗркин пуянлӑхне тишкернӗ. Л.И.Бушуева «Музыкальные традиции чувашских поселений Нурлатского района Республики Татарстан» ятпа пичетленнӗ статйинче фольклор юрри-кӗввине тишкернӗ. Е.В.Сергеева «Надгробные памятники и намогильные юпа Нурлатского района Республики Татарстан» ӗҫӗнче чӑваш масарӗсем ҫинчи юпасем ҫинчен ҫырнӑ. Е.В.Федотова (Ермилова) «Современное состояние традиционного фольклора чувашей Нурлатского района Республики Татарстан (по материалам экспедиции 2008 г.)» статйинче тӑван Нурлат районӗнчи чӑвашсен авалтан килекен йӑли-йӗрки ҫинчен, ӗлӗкрен упранса юлнӑ халӑх сӑмахлӑхӗн пуян тӗслӗхӗсене кӑтартнӑ. Вӗсене автор 1992 ҫултанпа паянхи кунччен ятарласа пухнӑ, кашни текста юратса ҫырса илнӗ, нумай текста манӑҫа тухасран упраса хӑварнӑ, паянхи вулакан патне илсе ҫитернӗ. Елена Владимировна 2008 ҫулта Раҫҫей гуманитари наука фончӗн грантне илме тивӗҫнӗ, ҫав грантпа Нурлат районӗнче ятарласа темиҫе экспедици ирттернӗ, чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсене ҫырса илнӗ. Тутарстан Республикин Нурлат районӗнчи халӑх сӑмахлӑхӗ пуян пулнине палӑртмалла. Ӑна упраса хӑварасси – пирӗн тивӗҫ.

**Елена ФЕДОТОВА,**
филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ.
Шупашкар.
Автор архивӗнчи сӑнӳкерчӗксем.

тӗн

# ПРАВОСЛАВИ КАЛЕНДАРӖ – 2022



С.Колесникова сӑнӳкерчӗкӗ.

## Куҫса пыракан праҫниксем

**Апрелӗн 17-мӗшӗ** – Турӑ Иерусалима кӗнӗ кун – Кӑчкӑ праҫникӗ (Вербное Воскресенье).

**Июнӗн 2-мӗшӗ** – Мӑнкун иртсен хӗрӗх кунтан Иисус Христос Елеон тӑвӗ ҫинчен пӗлӗте хӑпарни – Вознесени.

**Июнӗн 12-мӗшӗ** – виҫипостаҫлӑ Таса Турӑ кунӗ. Мӑнкун иртсен аллӑмӗш кун пулакан уяв – Троица (Ҫимӗк).

## Куҫман праҫниксем

**Январӗн 7-мӗшӗ** – Иисус Христос ҫуралнӑ кун – Раштав.

**Январӗн 19-мӗшӗ** – Хӑва тӗмӗнче Турӑ курӑнни. Иисус Христос шыва кӗнӗ кун – Кӑшарни.

**Февралӗн 15-мӗшӗ** – Кӗтсе илме кайни, хирӗҫ тухса кӗтсе илни – Сретени.

**Апрелӗн 7-мӗшӗ** – Тасаран Таса Хӗре Ырӑ Хыпар пӗлтерни – Пӑлхавӑшни.

**Августӑн 19-мӗшӗ** – Турӑ ҫап-ҫутӑ пулса курӑнни – Преображени.

**Августӑн 28-мӗшӗ** – Турӑ Амӑшӗ леш тӗнчене канӑҫланса куҫса кайни – Успени.

**Сентябрӗн 21-мӗшӗ** – Турӑ Амӑшӗ ҫуралнӑ кун.

**Сентябрӗн 27-мӗшӗ** – Хӗресе ҫӗклесе кӑтартни – Воздвижени.

**Декабрӗн 4-мӗшӗ** – Таса Хӗре, пулас Турӑ Амӑшне Марийӑна Чиркӗве кӗртни – Введени.

## Аслӑ праҫниксем

**Январӗн 14-мӗшӗ** – Турӑ ӳтне Моисей йӑлипе кастарни – Обрезани.

**Апрелӗн 24-мӗшӗ** – Христос чӗрӗлнӗ Аслӑ кун – Мӑнкун.

**Июлӗн 7-мӗшӗ** – Иоанн Креститель ҫуралнӑ кун, ырлӑх илес умӗн килекен кун.

**Июлӗн 12-мӗшӗ** – Ҫветтуй Петрпа Павел апостолсен кунӗ. Ҫырла ҫимелли кун – Питрав.

**Сентябрӗн 11-мӗшӗ** – Иоанн Предтеча пуҫне каснӑ кун.

**Октябрӗн 14-мӗшӗ** – Таса Турӑ Амӑшӗн Ҫивитти хӳтти кунӗ – Пукрав.

## Пӗр кун тытмалли типӗсем

**Январӗн 18-мӗшӗнче** – Турӑ шыва кӗрес умӗнхи кун.

**Сентябрӗн 11-мӗшӗнче** – Иоанн Предтеча пуҫне каснӑ кун.

**Сентябрӗн 27-мӗшӗнче** – Воздвижени. Хӗресе ҫӗклесе кӑтартнӑ кун.

Тата ҫаплах типӗсӗр эрнепе Ҫветке вӑхӑчӗсӗр пуҫне ҫулталӑк тӑршшӗпе юнкунпа эрнекун.

## Нумай кун тытмалли типӗсем

**Мартӑн 7-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 23-мӗшӗччен** – Аслӑ типӗ – Мӑнкун типпи.

**Июнӗн 20-мӗшӗнчен пуҫласа июлӗн 11-мӗшӗччен** – Питрав типпи.

**Августӑн 14-27-мӗшӗсенче** – Успени типпи (Сӑпас типпи).

**Ноябрӗн 28-мӗшӗнчен пуҫласа январӗн 6-мӗшӗччен** – Раштав типпи.

## Вилнисене асӑнмалли кунсем

**Февралӗн 26-мӗшӗнче** – Пӗтӗм тӗнчери ваттисене асӑнмалли кун.

**Мартӑн 19-мӗшӗнче** – Мӑнкун типпин иккӗмӗш шӑматкунӗ.

**Мартӑн 26-мӗшӗнче** – Мӑнкун типпин виҫҫӗмӗш шӑматкунӗ.

**Апрелӗн 2-мӗшӗнче** – Мӑнкун типпин тӑваттӑмӗш шӑматкунӗ.

**Майӑн 3-мӗшӗнче** – Радоница – Ваттисен кунӗ.

**Майӑн 9-мӗшӗнче** – Вӑрҫӑра пуҫ хунисене асӑнмалли кун.

**Июнӗн 11-мӗшӗнче** – Троица умӗнхи (Ҫимӗк) ваттисене асӑнмалли кун.

**Ноябрӗн 5-мӗшӗнче** – Дмитриевски ваттисене асӑнмалли кун.

Ркаил ЗАЙДУЛЛА

# ПЕПКЕ

Калав

(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1№).

Уяв вӗҫленсен сухалли хӗре пӳлӗмне ҫити ӑсатса яма ирӗк ыйтрӗ. Вӑхӑтран-вӑхӑта вӑл тайӑла-тайӑла кайрӗ, ӑнсӑртран тенӗ пек хӗр хулпуҫҫийӗ ҫине таянчӗ, хӑй пӗр чарӑнмасӑр мӑкӑртатрӗ: «Куратӑн-и ҫак алӑсене? Ылтӑн алӑсем вӗсем... Тутарстанра ҫавӑн пек тепӗр врача шыраса тупаймӑн...»

Пӳлӗме кӗнӗ хыҫҫӑн ӗнтӗ вӑл темшӗн аллине чӑмӑртаса ҫӳлелле ҫӗклерӗ: «Азатлык!» – тесе кӑшкӑрчӗ. Хӗр ӑна хӑваласа ямарӗ. Ӑҫта ӗнтӗ унта хӑваласа яма – пӗчченлӗхе пула арҫыншӑн тунсӑхланӑ ӳчӗпе ҫак сухаллин тар шӑршиллӗ кӳлепи ҫумне тачӑ ҫыпҫӑнса ҫӗрӗпе выртрӗ. Ирхине сухалли, кайма хатӗрленсен ӗнтӗ, сывпуллашас вырӑнне ҫапла каласа хӑварчӗ:

– Тутарсен ытларах ача ҫуратмалла. Атту таврара пӗр вырӑссем ҫеҫ...

Урӑх курӑнмарӗ вӑл. Вӑхӑт ҫитсен ача ҫураттаракан ҫурта хӗр-тусӗ ӑсатса ячӗ...

Тӗттӗмленсе пычӗ. Чӳрече хыҫӗнче касса тирпейленӗ йӑмра кӳлепи палӑрать. Вӑл тӳпенелле кӑлӑхах кармашса, хӑйӗн вӑйсӑрлӑхӗшӗн асапланса пӗр сассӑр хурланакан ҫунатсӑр вӗҫен кайӑк пек...

Хӗрарӑм тумбочкӑран пӗчӗк ҫеҫ хут коробка кӑларчӗ. Ӑна ирхине хӗр-тусӗ илсе килсе хӑварнӑччӗ... Вӑл хӑй ӑнаҫлӑ качча тухрӗ, виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттерте юрласа кӑна пурӑнать, икӗ ача ӳстерет. Паян вӑл васкарӗ, ҫавӑнпа хӑйӗн хаклӑ кӗрӗкне хывса та тӑмарӗ.

– Вӑхӑт ҫук, хӑнана каятӑп, – терӗ вӑл. – Акӑ сана ампула. Питӗ пысӑк блатпа тупма май килчӗ. Хаклӑскер. Пӗр укол ҫителӗклӗ. Ан хумхан, ҫавах пурнас ҫын мар вӑл. Хӑвна мӗншӗн асаплантармалла?.. Пачах урӑхла, эсӗ ырӑ ӗҫ тӑватӑн – унӑн айӑпсӑр чунӗ тӳрремӗнех ҫӑтмаха вӗҫсе каять... Эсир иксӗр те ҫак хӑрушӑ тӗлӗкрен хӑтӑлатӑр. Анчах та эсӗ ытлашши ан сӑмахла, инвалид ача мӗншӗн вилни пирки никамах та тӗпчесе тӑмӗ. Эмелӗ те ку чаплӑскер, хӑш-пӗр чиртен сыватма та пултарать теҫҫӗ, ӑна организмра уйӑрса та илеймӗҫ. Саншӑн, ухмахскершӗн, тӑрӑшатӑп...

Пӳлӗмре чаплӑ йышши духи шӑрши хӑварса тус-тантӑшӗ алӑк леш енче ҫухалчӗ.

Ҫакӑн пирки нумай калаҫнӑччӗ вӗсем. Тӗлӗк те курнӑччӗ вӑл: унӑн пепкин сасартӑках ҫунатсем шӑтса тухнӑ пек те вӑл пирӗштисемпе пӗрле тӳпере ярӑнать пек. Таврара вӗҫен кайӑксем юрлаҫҫӗ, шывсем шӑнкӑртатаҫҫӗ, йывӑҫсем ҫинче улма-ҫырла хӗрелет. Чӑн-чӑн ҫӑтмах!.. Ӑна унта лайӑх пулать, Турӑ ӑна ку пурнӑҫра уйӑрса хӑварнӑ ырлӑха парнелет...



Ю.Капитонов *ӳкерчӗкӗ.*

Укол тунӑ вӑхӑтра пепке йӗмерӗ. Тен, ыратнине туймарӗ те пулӗ пӗчӗкскер. Анчах та темшӗн амӑшӗ патне пӳрнесӗр аллине тӑсрӗ.

Ҫутӑ ҫутмасӑр, пӗр хускалмасӑр хӗрарӑм сӗмлӗх карнӑ чӳречерен пӑхса ларчӗ.

Виҫӗмкун вӑл ӑнсӑртран училищӗре пӗрле вӗреннӗ арҫынна тӗл пулчӗ. Инҫе мар пурӑннине пӗлсен арҫын хӑнана пыма кӑмӑл турӗ. Ӑмсанмалла йӑрӑлӑхпа лавккара эрех, шоколад, ытти уни-куни илсе тултарчӗ. Арҫын кӑшт кӑна сыпкаланӑскерччӗ, ку тӗлпулуран тем кӗтрех пулӗ. Лавккана та вӑл тахҫан пӗрле вӗреннӗ хӗршӗн тунсӑхланипе мар тапса сикрӗ ӗнтӗ. Вӗреннӗ чухне каччӑ ӑна асӑрхаман та вӗт.

Чылайччен уҫҫине ҫӑра шӑтӑкне лектереймесӗр асапланчӗ хӗрарӑм. Юнашар пӗрле вӗреннӗскер чӑтӑмсӑррӑн урисемпе тӑпӑртаткаласа тӑчӗ. Ача пур тени ӑна темшӗн савӑнтарчӗ ҫеҫ. Анчах та шалта кӗтекен тӗрӗслев уншӑн ытлашши пулса кайрӗ... Кӑштах сӗтел хушшинче ларкаларӗҫ вӗсем, ытахальтен тенӗ пек калаҫкаларӗҫ, унтан хӑна эрехне ӗҫсе пӗтермесӗрех тухса кайрӗ. Сывпуллашнӑ чухне тата килетӗпех тесе шантарчӗ. Иккӗшӗ те питӗ лайӑх ӑнланчӗҫ ку тӗлпулу юлашки пулнине.

Унӑн тек нихҫан та, ватӑличченех урӑх арҫын пулмасть текен шухӑшпа ҫырлахнӑччӗ ӗнтӗ хӗрарӑм. Чӑнах та, пӗр вӑхӑт ун патне ҫул ҫитмен ҫамрӑк евӗрлӗ азербайджанец, Арменипе Азербайджан хирӗҫтӑрӑвӗнчен тарса килнӗскер, ҫӳретчӗ. Азербайджанец вырӑнти хӗрсем ӗҫлекен икӗ ларекӑн хуҫиччӗ, кашни ирех ларексене улма-ҫырла леҫетчӗ. Пачах та хыткукар марччӗ арҫын, еркӗнне кӑшт ҫеҫ пӑсӑлма пуҫланӑ улма-ҫырлапа тивӗҫтерсе тӑратчӗ. Чирлӗ ачаран йӗрӗнместчӗ вӑл. Анчах... юлашки вӑхӑтра азербайджанец та темшӗн ҫӳреме пӑрахрӗ.

...Кравать ҫинчен темле ӑнланмалла мар сасӑсем илтӗнме пуҫларӗҫ, халӗ вара пӳлӗмри шӑплӑх уйрӑмах палӑрма тытӑнчӗ – ку вӑл хӑрушлӑх шӑплӑхӗ пулчӗ. Пырӗ патне темле чӑмакка кусса пынине туйса хӗрарӑм вырӑнтан сиксе тӑчӗ, ӑсран тайӑлнӑ евӗр алӑк еннелле вирхӗнчӗ.

Урам ҫуркунне сывлӑшӗпе тулса ларнӑччӗ, юр ирӗлсе пӗтнӗпе пӗрех – унӑн пылчӑкланнӑ татӑкӗсем ҫуртсен стенисем ҫумӗнче, хӗвел лекмен ҫӗрте ҫеҫ юлнӑ.

Хӗрарӑм нимӗн шухӑшсӑр, ӑҫта кайнине ӑнланмасӑр, ҫул ҫитмен ҫамрӑксен шӳчӗсене хӑлхана чикмесӗр тӗттӗм урамсем тӑрӑх утрӗ, хӑрушӑ картишсем витӗр тухрӗ.

Хула тӑрӑх ҫӳресе ывӑнса вӑл килне таврӑннӑ ҫӗре общежити алӑкне питӗрсе хунӑччӗ ӗнтӗ. Хӗрарӑм чылайччен шаккарӗ, алӑк леш енче тинех ура сассисем илтӗнчӗҫ. Ватӑ вахтерша мӑкӑртатса алӑка уҫрӗ, хӗрарӑма курайман куҫӗсемпе пӑхса илчӗ те ҫавӑрӑнса тӑчӗ: «Сулланса ҫӳреҫҫӗ кунта ...»

Хӗрарӑм хирӗҫ нимӗн те чӗнмерӗ, хӑйӗн патне иккӗмӗш хута чупса хӑпарчӗ. Пӳлӗме васкавлӑн кӗрсе вӑл выключателе пусрӗ те йӑлтӑркка ҫутӑпа суккӑрланса ларнӑскер, чарӑнса тӑчӗ. Куҫӗсем хӑнӑхса ҫитнӗ хыҫҫӑн ахлатса ячӗ: «Пеп-ке-ҫӗм...»

Кравать ҫинче, аллисемпе хӗррисене карнӑ сеткӑна ҫатӑрласа тытса, кулакан ача тӑрать, унӑн пӗркеленнӗ тутисем пӗли-пӗлми пурнӑҫра пӗрремӗш хут «анне!» сӑмаха калама хӑтланаҫҫӗ.

Хӑйӗн ывӑлӗ, хӑйӗн тӗпренчӗкӗ, мӗнпур пуянлӑхӗ патне аллисене тӑсса хӗрарӑм чӳрече патне утӑм турӗ. Унта вара – тепӗр енче – вӗҫсӗр-хӗрсӗр те ытарайми хитре тӗнче.

**Евгений ТУРХАН** куҫарнӑ.

## поэзи кӗтесӗ

### ҪӐМЛАМАС ТИГР ҪУЛӖ

Ырлӑхпа телей сунатпӑр,
Тӑванӑм сана.
Ҫӗнӗ ҫул юрри юрлар-ха,
Кала купӑсна.

Вӗлтӗр-вӗлтӗр юр пӗрчи
Вӗлкӗшсе ӳкет.
Сивӗ хаяр Хӗл Мучи
Пите чӗпӗтет.

Ырлӑхпа пурлӑх сунатпӑр,
Чӗререн тӑван.
Тигр ҫулӗнче пӗрле
Пурӑнар аван.

Ҫӗнӗ ҫул юррин илемӗ –
Купӑс кӗввинче.
Чун-чӗре вӗри хӗлхемӗ
Пирӗн чунсенче.

Ҫӑмламас Тигр хаваслӑ,
Тӗнчене ҫитрӗ хӑюллӑ.
Кӗтсе илтӗмӗр савса,
Пӗр-пӗрне телей сунса!

Илсе килчӗ савӑнӑҫ,
Чӗртрӗ чӗрере хӗлхем.
Ҫутӑ, телейлӗ пурнӑҫ,
Юрату парнелесем.

Сут телей, ырлӑх тивлечӗ
Килтӗр кашни ҫул.
Ҫӑмламас Тигр ак килчӗ –
Ҫитрӗ ҫӗнӗ ҫул!

**Николай ЕЛЛИН.**

### КӖТНӖ ҪӖНӖ ҪУЛ

Шур мерченсем куллен пит эрешлеҫҫӗ,
Хӗвел шевлипеле ялтӑраса.
Йӗри-тавралӑха илем кӳреҫҫӗ –
Чун-чӗрене шав хавхалантарса!

Раштав та, ав, ҫулталӑка вӗҫлерӗ.
Ҫаран-улӑхсене, уй-хирсене
Шеп капӑрлатрӗ, савӑнса ӗҫлерӗ,
Сарса эрешлӗ шур пӗркенчӗкне!

Чӳречене хавхаланса тӗрлерӗ,
Савӑнтарать пире илемӗпе.
Ҫӗрле ҫӗр ҫич ӳкерчӗк чӗнтӗрлерӗ,
Ӑмсантарать чечен эрешӗпе.

Питрен-куҫран чӗптет сив хӗл ачийӗ
Астутарса Ҫӗн ҫул ҫывхарнине.
Ҫич пар лаша кӳлет те Хӗл Мучийӗ
Савса ҫула тухать мӑнукӗпе.

Ҫӗн ҫул! Сана кӗтсе мӑнаҫланатпӑр
Сӗм несӗлсен йӑли-йӗркипеле,
Асаннепе пӗрле ҫӗрӗ яратпӑр
Асамлӑ каҫ чун хавалӗпеле.

Хӗрсем Ҫӗн ҫул юррисене юрлаҫҫӗ,
Ҫӗррисене яраҫҫӗ савӑта.
Пӗлесшӗн хӑй шӑпине юмахлаҫҫӗ:
«Мӗнле килет-ши юмлӑх Ҫӗн ҫулта?»

Кӗтсе сана чунтан хавхаланатпӑр!
Килсем эс савнӑ, кӗтнӗ Ҫӗнӗ ҫул!
Хапӑлласа куллен шанса тӑратпӑр,
Парнелесем пире тулли кун-ҫул!

**Валери ТУКТАР.**

### ХӖЛ ИЛЕМӖ

Тин-тинех шурӑ юр ҫуса лартрӗ,
Тин хупларӗ вӑл хура ҫӗре.
Тӗнчене ҫӗнӗ тум тӑхӑнтартрӗ,
Чӑннипех савӑнтарчӗ пире.
Шурӑ юр ӳкет ҫӳлтен васкамасӑр,
Вальс ташлаҫҫӗ юр пӗрчисем,
Эп сӑнатӑп ҫакна шавламасӑр –
Юмахри пек илемлӗ вӗсем.

Кашни пӗрчи уйрӑм, хӑйне майлӑ,
Ҫук пӗрре те иккӗ пӗр пекки.
Ҫӗр ҫине вырнаҫаҫҫӗ сӑпайлӑн –
Ҫемҫе пулӗ юр тӳшекки.
Хускалма хӑраса эп тӑратӑп
Пӑсасран кулянса илеме.
Юрпике пек хама хам туятӑп,
Юратап илемпе киленме.

**Татьяна ЕРМИЛОВА (НИКОНОРОВА).**

**суд залĕнчен**

## ÇУК ВЕТЕРАНСЕНЕ ПАЛĂК «ЛАРТНĂ»

Хусанти Советски районĕн сучĕ темиçе кун каялла ТР Çар комиссариачĕн социаллă тивĕçтерӳ уйрăмĕн экс-ертӳçи И.Скороходов, вилнисене пытаракан темиçе бюровĕн хуçи Б.Тутаев тата В.Муслимов енĕпе пуçарнă уголовнăй ĕçе пăхса тухма тытăннине хыпарлать «Татар-информ» ИА. Вĕсем ветерансене палăк лартма парăнакан укçана 2012-2013 çулсенче 500 суя документ хатĕрлесе хыснаран миллионĕ-миллионĕпе вăрланă.

2007 çулхи закон тăрăх, вăрçă ветеранĕсене палăк лартнăшăн патшалăх компенсаци парать. Ăна илес тесен ветерансен тăванĕсем документсем (заявлени, палăка чăнах лартнине ĕнентерекен сăнӳкерчĕк, тăкак чекĕсем) çар комиссариатне тăратмалла. Укçана кама уйăрасси Тутарстанра шăпах И.Скороходовран килнĕ. Вăл ала пусса панă, В.Муслимовпа (ăна хальлĕхе полици тытайман-ха) Б.Тутаев 500 çын ячĕпе (вĕсен хушшинче чăн-чăн пĕр ветеран та çук, пурте шутласа тупнисем) документсем хатĕрлесе уйăрнă укçана илсе тăнă.

Çак «ветерансен» палăкĕсен сăнӳкерчĕкĕсем çукки ултава çиеле кăларма пулăшнă та. Кунсăр пуçне И.Скороходов ветерансен пенсийĕсене кĕсьене чикнĕ тĕслĕхсем те нумай. Патшалăха пĕтĕмпе 40 миллион тенкĕ тăкак кӳни паллă. Вĕсенчен кашнине халĕ тăкака тавăрнисĕр пуçне тата 10-шар çул тĕрме кĕтет.

**криминал**

## ĔÇКĔ ÇАПĂÇТАРАТЬ

Ĕçке пула çак кунсенче Хусанти 50-ри хĕрарăм леш тĕнчене ăсаннă. Следствирен курăннă тăрăх, вăл хăйĕн хĕрĕпе, кĕрӳшĕпе тата пĕчĕк мăнукĕпе общежитин пĕр пӳлĕмĕнче пурăннă. Çав кун çамрăк анне ача укçи илнĕ те çемьепе пĕрле хăналанма шутланă. Ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ кĕрӳшĕпе хунямăшĕ тем пайлайман, çапăççах кайнă. Çиллине ниçта хурайман арçын 50-ри хĕрарăма хытах хĕненипе леш ир енне вилсе кайнă.

**Ирина КУЗЬМИНА** хатĕрленĕ.

## Эрнелĕх
**24.01 – 30.01**





**ТАКА 21.III – 20.IV**
Пĕр харăсах темиçе ыйтăва татса пама тивет. Тавлашăва е кăткăс ĕçе татса парас тесен харпăр илĕртӳлĕхпе усă курăр. Юлташсем те йывăр вăхăтра хăвармĕç. Хăюлăх пурри çĕнĕ идейăсене пурнăçлама, юратура вара хутшăнусене шанчăклăрах тума пулăшĕ. Канмаллисем романтикăлла тĕлпулушăн, çулçӳревшĕн ăнăçлă пулаççĕ.



**ВĂКĂР 21.IV – 20.V**
Çынна ăнланма пĕлни çĕнĕ юлташсем тупма пулăшать. Лару-тăру ăнăçлă килсе тухнипе çывăх çыннăн проблемине те мĕнле татса паmallине тавçăратăр. Юратура та ăнăçу кĕтет. Пĕчченнисем интереслĕ çынпа паллашĕç. Канмаллисенче тĕлпулусемсĕр пуçне аван хыпар илтетĕр. Сывлăхăра упрăр, хĕллехи сивĕсем усса каймĕç.



**ЙĔКĔРЕШСЕМ 21.V – 21.VI**
Ку эрне профессири çитĕнӳпе пуçланĕ. Авторитетлă çыннăн тимлĕхне çĕнсе илме пултаратăр. Ĕçлĕ çулçӳрев е тĕлпулу усса кайĕ, идейăрсене хакласа йышăнĕç. Пушă вăхăтра спортпа аппаланса irttерĕр. Эрне вĕçĕнче килпе, çемьепе çыхăннă ĕçсем нумайланĕç.



**РАК 22.VI – 22.VII**
Ку эрнере пĕр вăтанмасăр хăвăр кам пулнине кăтартăр. Планетăсем сире пулăшĕç. Эсир ăслă, хăюллă, вăйлă пулнипе конкурентсем те тарса пытанĕç. Килте те мĕнле кирлĕ, çапла пулса пырĕ. Пуриншĕн те идеал пулса тăратăр. Кирлĕ маррине пĕр шелсĕр кăларса ывăтăр.



**АРĂСЛАН 23.VII – 23.VIII**
Профессипе çыхăннă тивĕçсене çирĕп пăхăнма вăхăт çитнĕ. Çĕнĕ сĕнӳсемпе кĕтмен пулăмсем пулĕç. Вĕсем ăнăçлă вĕçленнинчен хăвăр та тĕлĕнетĕр. Çăлтăрсем пур енĕпе те пулăшса пырĕç. Ĕçтешсене кăткăс ыйтусенче пулăшса карьерăпа ӳсме пултаратăр. Ĕç шыракана та ăнать. Тахçанах килĕшекен çынпа тĕлпулăва кайса килĕр.



**ХĔР 24.VIII – 23. IX**
Кирлĕ марришĕнех çынпа ан тавлашăр. Пурпĕрех сире кирлĕ пек пулса пырĕ, ыттисен тем пек тăрăшсан та ĕç тухмĕ. Кăткăс хутшăнусене юратупа тăнăçлăх таврăнĕ. Пĕчченнисем юратура çăмăлттай пулса савнисене улăштарсах тăрĕç. Шалти сасса итлĕр, кăмăлăра хирĕç ан кайăр. Пĕр ахаль ан теветкелленĕр.



**ТАРАСА 24.IX – 23.X**
Çĕнĕ паллашу усăллă пулĕ, карьерăпа ӳсме пулăшĕ. Эрне тĕлпулусемшĕн, мĕн-тĕр туянма ăнăçлă. Тĕрĕс калаçсан ĕçре хăвăра кирлĕ йышăнусене васкатма пултаратăр. Çемьере пĕчĕк ăнланманлăх сиксе тухĕ, çавăнпа мĕн-тĕр каличчен лайăх шутлăр, ăнсăртран вĕçерĕннĕ сăмахшăн ӳкĕнмелле ан пултăр.



**СКОРПИОН 24.X – 22.XI**
Нумай шутланă хыççăн пач кĕтмен пĕтĕмлетӳ тăватăр. Пурнăçри пулăмсем çине философилле пăхатăр. Ку эрне искусствăпа, тĕрлĕ вăрттăнлăхпа ĕçлекенсемшĕн ăнăçлă. Укçапа çыхăннă ĕç ăнать. Çапах перекетлĕ пулма вĕренĕр. Суту-илӳре, ĕçлĕ калаçусенче те ăнса пырĕ. Юратура асăрхануллă пулăр, пур-çукшăн мăшăрăрпа ан тавлашăр.



**УХĂÇĂ 23.XI – 21.XII**
Ку эрнере ним те сирĕн тимлĕхрен пытанса юлмĕ, ĕçре те хăвăрт пулатăр. Наян, ялан мĕнпе те пулин кăмăлсăр çынсем тарăхтарĕç. Анчах çавара вăхăтлă хупма пĕлĕр. Унсăрăн пуррине çухатма пултаратăр. Юратура ăнать, нумай япала çине урăхла пăхатăр. Уйрăмах пĕчченнисене ăнать. Канмалли кун кĕтмен тĕлпулу пулĕ.



**ТУ КАЧАКИ 22.XII – 20.I**
Укçа енчен ăнăçлă тапхăр пуçланать. Ĕç укçине ӳстерме ыйтма ан вăтанăр. Хаклă япала туянма май пулĕ. Ĕçре те ăнăçлă майсем пулаççĕ, çитĕнӳшĕн пит ытла вăй хума та кирлĕ мар. Килте те лăпкă, чунри лăпкăлăха çемьерисем те туйĕç, ку вĕсен пурнăçне лайăхлатĕ.



**ШЫВТĂКАН 21.I – 20.II**
Пĕр харăсах темиçе çĕре çитме, шăнкăравланине хуравлама, темиçе ĕç тума тивĕ. Элексенчен пăрăнма тăрăшăр. Юратура та тем те пулса иртĕ, кăмăл романтикăлла пулин те юратнă çынран нумай ыйтатăр. Анчах мăшăрăн ыр кăмăлĕпе иртĕнсе усă ан курăр. Канмаллисенче тăван патне хăнана кайни кăмăла çĕклĕ.



**ПУЛĂСЕМ 21.II – 20.III**
Ку эрне мăшăрлă хутшăнăва лайăхлатма ăнăçлă. Юратнă çын хăйне епле тыткалани çинчен лайăх шутлĕ те шухăшĕсене улăштарĕ. Юлташсемпе ресторанта е кафере тĕл пулма аван вăхăт. Сире чаплă мероприятие чĕнме пултараççĕ. Тĕрлĕ кĕтменлĕх сиксе тухнипе плана улăштарма тивĕ. Ӳксе ыраттарма пултаратăр, çавăнпа спорт айккинче тăрăр.

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ

**Тунтикун, кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕ**
05.00 «Научные сенсации» (12+)
06.00 «Преступление и наказание» (16+)
06.45 «Время вкуса» (12+)
07.00, 08.30 «Ир пулсан» (12+)
08.00 «Эх, юррăм, янăра» (12+)
09.30 «Ман юрлас килет». Светлана Печникован пултарулăх каçĕ (16+)
12.00 «Мировой рынок» (16+)
13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.05, 02.30 «Гурзуф». Многосерийный фильм (12+)
14.00, 16.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
14.05 «Вольная грамота». Многосерийный фильм (16+)
15.05, 03.30 «Удиви меня» (12+)
16.05 «Это лечится» (12+)
16.30 «Свидетели». Многосерийный фильм (16+)
17.30 «Республика в деталях» (12+)
18.10 «Нулевой километр» (12+)
18.30 «Страна слепых» (12+)
19.30, 23.30 «Люди-легенды. Александр Петров» (12+)
20.30 «Тĕлĕнмелле çынсем эсир». Камит (16+)
23.00 «Самана» (12+)
00.30 «Не стучи дважды». Триллер (16+)
04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)

**Ытларикун, кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕ**
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Люди-легенды. Александр Петров» (12+)
06.00, 08.00, 14.00, 16.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.10 «Нулевой километр» (12+)
06.30, 18.30 «Страна слепых» (12+)
07.00, 08.30 «Ир пулсан» (12+)
09.30 «Тĕлĕнмелле çынсем эсир». Камит (16+)
11.00 «Самана» (12+)
12.00 «Мировой рынок» (16+)
13.05, 02.30 «Гурзуф». Многосерийный фильм (12+)
14.05 «Вольная грамота». Многосерийный фильм (16+)
15.05, 03.30 «Удиви меня» (12+)
16.05 «Клинический случай» (12+)
16.30 «Свидетели». Многосерийный фильм (16+)
17.30, 04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)
18.10 «Стеклянный дом» (12+)
19.30. 23.30 «Люди-легенды. Алексей Красотин» (12+)
20.30 «Асран кайми». Алёна Силпи концерчĕ (12+)
00.30 «Невероятные путешествия мистера Сливета». Драма (12+)

**Юнкун, кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕ**
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Люди-легенды. Алексей Красотин» (12+)
06.00, 08.00, 14.00, 16.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.10 «Стеклянный дом» (12+)
06.30, 18.30 «Страна слепых» (12+)
07.00, 08.30 «Ир пулсан» (12+)
09.30 «Асран кайми». Алёна Силпи концерчĕ (12+)
12.00 «Мировой рынок» (16+)
13.05, 02.30 «Гурзуф». Многосерийный фильм (12+)
14.05 «Вольная грамота». Многосерийный фильм (16+)
15.05, 03.30 «Удиви меня» (12+)
16.05 «Эпидемия» (12+)
16.30 «Свидетели». Многосерийный фильм (16+)
17.30, 04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)
18.10 «Общественный тренд» (12+)
18.20 «Промышленный век» (12+)
19.30, 23.30 «Мухтавлă çынсем: Аркадий Айдак» (12+)
20.30 «Кай, кай Ивана». Камит (12+)
00.30 «Эйфория». Драма (16+)

**Кĕçнерникун, кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕ**
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Мухтавлă çынсем: Аркадий Айдак» (12+)
06.00, 08.00, 14.00, 16.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.10 «Общественный тренд» (12+)
06.20 «Промышленный век» (12+)
06.30 «Страна слепых» (12+)
07.00, 08.30 «Ир пулсан» (12+)
09.30 «Кай, кай Ивана». Камит (12+)
12.00 «Мировой рынок» (16+)
13.05, 02.30 «Случайная невеста». Многосерийный фильм (16+)
14.05 «Вольная грамота». Многосерийный фильм (16+)
15.05, 03.30 «Удиви меня» (12+)
16.05 «Это лечится» (12+)
16.30 «Свидетели». Многосерийный фильм (16+)
17.30, 04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)
18.10 «Территория здоровья» (12+)
18.20 «Естественная среда» (12+)
18.30 «От классики до рока» (12+)
19.30, 23.30 «Люди-легенды. Василий Чапаев» (12+)
20.30 «Ман тăван енĕм». Алина Федорован концерчĕ (12+)
00.30 «Человек, который смеется». Драма (16+)

**Эрнекун, кăрлач уйăхĕн 28-мĕшĕ**
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Люди-легенды. Василий Чапаев» (12+)
06.00, 08.00, 14.00, 16,00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.10 «Территория здоровья» (12+)
06.20 «Естественная среда» (12+)
06.30, 18.30 «От классики до рока» (12+)
07.00, 08.30 «Ир пулсан» (12+)
09.30 «Ман тăван енĕм». Алина Федорован концерчĕ (12+)
12.00 «Мировой рынок» (16+)
13.05 «Случайная невеста». Многосерийный фильм (16+)
14.05 «Вольная грамота». Многосерийный фильм (16+)
15.05 «Удиви меня» (12+)
16.05 «Клинический случай» (12+)
16.30, 01.00 «Свидетели». Многосерийный фильм (16+)
17.30, 04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)
18.10 «На земле» (12+)
18.20 «КЛАССная история» (12+)
19.00, 00.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
20.30 «Тип çиçĕм». Телефильм (12+)
23.30 «Люди-легенды. Александр Петров» (12+)

**Шăматкун, кăрлач уйăхĕн 29-мĕшĕ**
05.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
06.00, 08.30 «Республика». Информационная программа (12+)
06.10 «На земле» (12+)
06.20 «КЛАССная история» (12+)
06.30, 18.00 «От классики до рока» (12+)
07.00, 22.30 «Научные сенсации» (12+)
08.30 «Тип çиçĕм». Телефильм (12+)
11.00, 22.00 «Непростые вещи» (12+)
11.30, 23.30 «Опыты дилетанта» (12+)
12.00, 00.00 «Цена прошлого». Многосерийный фильм (16+)
14.00 «Человек - невидимка» (12+)
15.00, 02.00 «Эревет - манăн пурнăç» (12+)
19.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
20.30 «Эх, юррăм, янăра» (12+)
21.00 «Итоги недели» (12+)
04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)

**Вырсарникун, кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕ**
05.00 «Научные сенсации» (12+)
06.00, 18.00 «Юбилейный концерт Олеси Саксонской и студии «Феерия» (12+)
07.00 «Турă пӳрмен юрату». Драма (12+)
09.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
10.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
11.30 «Опыты дилетанта» (12+)
12.00, 01.30 «Цена прошлого». Многосерийный фильм (16+)
14.00, 03.30 «Научные сенсации» (12+)
15.00 «Албена юратăвĕ». Спектакль 16+)
19.00 «Телейпе Илем». Трагеди (12+)
21.30 «Чĕререн тухакан юрăсем». Эстрада концерчĕ (12+)
00.30 «Удиви меня» (12+)
04.30 «Четверо в кубе». Мультфильм (0+)

# Саламлатпăр!



*Аксу хула евěрлě поселокěнче пурăнакан хаклă та хисеплě тăванăмăр, Аксу вăрман хуçалăхěнче вăрмана хураллас тата сыхлас енěне нумай çул инженер пулса ěçленě* ***Александр Степанович ИЛЬМУХИН*** *январěн 19-мěшěнче 80 çул тултарчě. Эпир ăна çак сумлă юбилей ячěпе чěререн саламласа хурçă пек çирěп сывлăх, иксěлми вăй-хал, тулли телей, вăрăм ěмěр сунатпăр. Утас çулу такăр пултăр, пурнăçри кашни самант савăнăçпа тултăр. Мěн шухăшлани пурнăçлансах пытăр!*



*Иртет-çке вăхăт, çитрě юбилей,*
*Пур кăмăлтан сана халь саламлатпăр.*
*Хěвеллě пурнăç, сывлăх та телей,*
*Вăй-хал, ыр кăмăл, канăçлăх сунатпăр.*

**Сывăх тăванěсем.**

• • • • • • • • •



*Хисеплě ěçтешěмěре, пултаруллă та шанчăклă юлташа, Теччě районěнчи Чăваш нацие культура центрěн ертӳçине* ***Володар Аркадьевич ТИМОФЕЕВА*** *январěн 22-мěшěнче 70 çул тултарнă ятпа хěрӳллěн саламлатпăр! Вырăнти ЧНКЦна ертсе пыма тытăннăранпа районта чăваш сасси çěнě вăйпа янрама пуçларě, çулталăкне тěрлě шайри вун-вун мероприяти ирттерсе чăваш культурине аталантаратпăр, Теччě тăрăхě çěр çинчи мěнпур чăвашăн чи сăвапллă вырăн пулнăран çěршер хăна йышăнатпăр. Ку вăл йăлтах эсир тăрăшнипе, тěрев панипе пурнăçланакан ěç. Савăнпа пурнăçа паянхи пекех юратса нумай çул пурăнма çирěп сывлăх, иксěлми вăй-хал, тулли телей сунатпăр. Мěн ěмěтленни, палăртни пурнăçланса пытăр.*

**Районти мěнпур чăваш ятěнчен вырăнти ЧНКЦ хастарěсем.**

• • • • • • • • •

*Элмет районěнчи Кителга ялěнче пурăнакан юратнă аннене* ***Елена Федоровна КАЛУГИНĂНА*** *81 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр! Çавăн пекех вěсем аттене Виталий Борисовичпа пěрлешсе çемье çавăрнăранпа 63 çул çитрě – аттене аннене çак паллă кунпа та саламлатпăр! Эсир 10 ача çуратса ӳстернě, пурне те вěрентнě. Таймапуç сире! Иксěре те çирěп сывлăх, иксěлми телей, вăрăм ěмěр, канлě ватлăх сунатпăр. Эпир сире çав тери хытă юратпăр, тата нумай-нумай çул савăнса пурăнма сунатпăр.*



*Нихăçан вăй-хал ан чактăр,*
*Пулăр сывлăхлă ялан.*
*Эпир ăшшăн саламлатпăр*
*Ыр сунса сире чунтан!*

**Ачисемпе мăнукěсем.**

## кăшарни – 2022







Сăнӳкерчěксем «Татар-информ» ИА.

## кăштах кулăш

Начар çын пулас тесен мěн тумалла тетěр-и? Акă сире инструкци:
1. Кама та пулсан кивçен укҫа парăр.
2. Питě вăрах кětěр.
3. Кěтсе илеймесен хăвăр кивçен укçа панă çынран хăçан тавăрса парасси пирки ыйтăр.
4. Вçо, хатěр – халь эсир чи-чи начар çын!

* * *

Вěçкěн Ваçса ир-ирех пулла кайма хатěрленет. Арăмě ыйхă тěлěшпе:
– Эс ăçта пуçтарăнтăн? – тесе ыйтать.
– Пулла, – хуравлать Ваçса.
– Çăрттан, пěр кило çěрулми, çăкăр тата пěр литр сěт тытса кил вара, – тет те арăмě каллех çывăрса каять.

* * *

Чăнкă Мирунпа Вěçкěн Ваçса тěл пулнă тет.
– Эс мěн, çав тери çиллес? – ыйтать Мирун Ваççаран.
– Э-эй, арăмпа хирěçрěм-ха.
– Мěн пирки тата?
– Ара, отпуска ăçта ирттермелли пирки ниепле те калаçса килěшейместěпěр.
– Ыйтăвě мěнре вара?
– Манăн Тайланда каяс килет, арăмăн вара манпа пырас килет…

* * *

Чăнкă Мирун кафене кěрет. Ун умне самантрах официантка чупса пырать:
– Мěн заказ парасшăн? – интереснет хайхискер.
– Мана, тархасшăн, пěр стакан сěт, çу сěрнě икě булка, икě çăмарта тата ырă сăмах.
Вичçě минутран официантка ăна сěт, булка тата çăмарта килсе парать.
– Ырă сăмах вара? – тěпчет Мирун.
– Çăмартисене ан çийěр, вěсем пăсăлнă…

* * *

Яка Кулине урай çăвать. Упăшки кресло çинче хаçат вуласа ларать.
– Урусене йăт-ха, сăтăрса илем, – тет хěрарăм.
– Вăт вěт, эс эп пулăшмасăр урай та çăваймастăн… – мăкăртатать упăшки.

*пěлтерӳ*

## «СУВАРА» ЖУРНАЛИСТ КИРЛĚ!

«ТАТМЕДИА» АО филиалне «Сувар» хаçат редакцине журналист – корреспондент – кирлě. Енчен те эсир журналистика сферинче ěçлеме ěмěтленетěр пулсан хаçатăн suvar@mail.ru электронлă почти çине хăвăрпа паллаштарса резюме çырса ярăр. Корреспондент должноçне çак требованисене кура йышăнатпăр:
- Аслă пěлӳ пурри (профильлě пулсан аванрах е филолог)
- Чăвашла таса та лайăх калаçни
- Чăваш чěлхин грамматикине пěлни
- Чăваш чěлхипе текстсем, статьясем çырма пултарни
- Информацине ěçлеме пěлни
- Компьютерпа ěçлеме, Word программăна пěлни
- Коммуникабельлěх
- Тěллевлěх

Енчен те эсир çак требованисене тивěçтеретěр пулсан резюме ярса парăр, ăна WhatsApp-па 8 917 907-68-81 номерпе яма та пултаратăр. Кěтетпěр!

**Редакци.**

vk.com/suvargazeta ok.ru/suvarkhaat @suvargazeta www.suvargazeta.ru

**Учредитель: АО «ТАТМЕДИА»** **сăвар – чăвашсен сěм авалхи ячě** **www.suvargazeta.ru** **Тел. рекламной службы: 89179076881**

**«СУВАР»**
республиканская газета на чувашском языке

Главный редактор-руководитель филиала АО «ТАТМЕДИА» – И.Ф. Трифонова
Тел.: 222-09-84 (16 04)

**Адрес редакции:** Республика Татарстан, г.Казань, ул. Декабристов, д. 2.
**Для писем:** 420066, г.Казань, а/я 64
**E-mail:** suvar@mail.ru
**Тел:** (843) 222-09-84 (17 98) журналисты (843) 222-05-44, 518-33-75 приемная
**Издатель:** АО «ТАТМЕДИА» 420097, г. Казань, ул. Академическая, д. 2

QR код для смартфона

Газета зарегистрирована 23 марта 2011 года Федеральной службой по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) Свидетельство о регистрации ПИ № ФС77-44361

Номер отпечатан в типографии филиала АО «ТАТМЕДИА» ПИК «Идел-Пресс» г.Казань, ул. Декабристов, д.2

Создано при поддержке Республиканского агентства по печати и массовым коммуникациям РТ

Тираж 1768 экз.

Дежурный по номеру Вера Александрова

Мнение редакции не всегда совпадает с мнением авторов. Редакция не распологает возможностью выступать ходатаем в официальных организациях. Рукописи не рецензируются и не возвращаются. За достоверность рекламных объявлений ответственность несет рекламодатель. Перепечатка материалов разрешается только с письменного согласия редакции.

**Реквизиты:** (без пробелов) Филиал АО «ТАТМЕДИА» «Редакция газеты «Сувар» Банк: ПАО «АК БАРС» БАНК г.Казань р/сч 40702810200020010327 кор/сч 30101810000000000805 БИК 049205805 ИНН 1655144950 КПП 165802003 ОГРН 1071690057834

**Стоимость поздравления до 600 знаков (с пробелами) – 600 рублей, от 600 до 1000 знаков – 1000 рублей.**

Газета выходит по пятницам. Заказ №2791 Подписные индексы газеты: в Татарстане **П2340**, в Российской Федерации **П7093** Цена свободная.

16+